24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
12
ШАМАТКУН
162 (5877) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ.

Йӑлтах фронт валли!

Вӑрҫӑн кашни кунӗ, тӑшмана хирӗҫ пыракан кашни ҫапӑҫу совет хӗҫпӑшалӗн мухтавне темиҫе хут ӳстерет. Совет артиллерийӗ тӑвӑллӑн персе тӑнинчен, пирӗн бомбӑсем пурне те ҫӗмӗрсе тӑкакан вӑйӗнчен, пулемет сапакан тӑхланран, танксен гусеницисем айӗнче, шыв айне яракан бомбӑсенчен, красноармеецсен мухтавлӑ винтовкисемпе штыкӗсенчен тӑшмансем халех ӗнтӗ ҫӗршер пинӗн пӗтрӗҫ. Совет Союзӗн тӑшман туртса илнӗ территорийӗ фашистсен юнӗпе шӳнӗ. Тӑшманӑн ҫухатӑвӗсем кашни кун ӳссе пыраҫҫӗ тата малашне те ӳссе пырӗҫ. Фашистла ирсӗр вӑрӑ-хурахсем хӑйсен юнӗпех чыхӑнса вилеҫҫӗ.

Гитлерӑн «ҫиҫӗмле вӑрҫӑ» планӗсем арканса кайрӗҫ. Нимӗҫ фашисчӗсен чи лайӑх дивизийӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Анчах тӑшман халӗ те вӑйлӑ-ха, вӑл пур енчен те хӗҫпӑшалланнӑ. Ултавлӑ тата вӑйлӑ тӑшмана хирӗҫ малашне те пысӑк ҫапӑҫусем пулаҫҫӗ. Пирӗн мухтавлӑ, хӑватлӑ ҫар тӑшмана халран ярать тата ывӑнма пӗлмесӗр ҫапа-ҫапа ҫӗмӗрет. Вӑл фашистла вӑрӑ-хурахсене пӗр минутӑлӑх та канӑҫ памасть. Пирӗн промышленность, тыл, пӗтӗм ҫӗршыв фашистла бандитсене ҫӗмӗрес ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара пулӑшу параҫҫӗ. Халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин юлташ радио тӑрӑх тунӑ выступленире ҫапла кӑтартса пачӗ: «Пирӗн винтовкӑсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кӑларас пулать...» терӗ. Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн пуҫлӑхӗ чӗнсе калани совет патриочӗсен чӗрисене хӗрӳллӗ вӑйпа ҫӗклесе ячӗ. Мӗнпур ҫӗршыва ӗҫри нихҫан пулман пысӑк хастарлӑх хавхалантарса ҫӗклерӗ. Металлургсем, горняксем, оружейниксем, самолетсемпе танксем тӑвакансем пӗртен-пӗр кӑмӑлпа—нумайрах хурҫӑ тата металл парас кӑмӑлпа ҫунаҫҫӗ. Нумайрах станоксем, нумайрах та нумайрах самолетсем, танксем, винтовкӑсем, бомбӑсем, моторсем, пулеметсем, минометсем, снарядсем, пулясем туса кӑларар. Тӑшмансен пуҫӗсем ҫине взрыв тӑвакан япаласен иксӗлми юхӑмӗ капланса анать, вӗсене кӗл туса вӗҫтерет, пӗтерсе тӑкать, ҫӗр пичӗ ҫинчен шӑлса ывӑтать.

Совет ҫыннисен патриотла туйӑмӗсем ӗҫсенче, производствӑллӑ плансене ирттерсе тултарнинче, фронт нушисем валли продукци хушса кӑларнинче пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Запорожье заводӗнчи металлургсем кунсеренех планран ирттерсе хурҫӑ тата прокат параҫҫӗ.

Сталин ячӗпе тӑракан шахтӑри нумай забойщиксем кунсеренех тӑватӑ нормӑран пуҫласа ултӑ нормӑна ҫити ӗҫлесе тӑваҫҫӗ.

Бакури паллӑ буровой мастер Арсен Ванесов тата унӑн бригади тӑшмана пӗтӗмӗшпех ҫӗмӗрсе тӑкичченех сталинла вахтӑра тӑма пулнӑ. Ҫакӑ вӑл скважинӑсене халичченхинчен ик-виҫӗ хут хӑвӑртрах пӑраласа шӑтарассине пӗлтерет. Чӑннипех те, проходка планӗ 400—500 процент тулса пырать.

Войков ячӗпе тӑракан заводри рабочисем хальхи вӑхӑтра пӗр эрне хушшинче туса кӑларакан конструкцисен хисепӗ вӗсем вӑрҫӑччен пӗр уйӑхра туса кӑларнӑ конструкцисен хисепӗпе танлашать.

Патриотла хӑватлӑ ҫӗкленӳпе пӗрле ӗҫ тухӑҫлӑхӗ хӑпарса пырать кӑна мар, тата творчествӑллӑ шухӑш, изобретательство, рационализаци вӑйланса пырать. Запорожье облаҫӗнчи Больше-Токмакски заводри стахановец Яковенко юлташ ӗҫ тухӑҫлӑхне ҫӗр хут ӳстерекен приспособлени шутласа кӑларнӑ. Ҫак приспособлени пулӑшнипе Яковенко сменӑри нормӑна 10.000 процент тултарнӑ. «Манометр» заводӑн коллективӗ яланхи условисенче тума 5—6 уйӑх кирлӗ пулнӑ детальсене туса кӑларас ӗҫе виҫӗ кун хушшинче вӗренсе ҫитнӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи условисем уйӑхсемпе эрнесене кунсемпе сехетсем таран кӗскетме хушаҫҫӗ. Вӑрҫӑ конструкторсене, техниксене чӑннипех те вӑрҫӑлла пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ӗҫлеме хушать. Хӑвӑрт конструкцилесси тата туса кӑларма хӑвӑрт вӗренсе ҫитесси вӑл—пӗр вӑхӑт хушшинче халичченхинчен нумайрах продукци парассине пӗлтерет. Белофинсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Ленинградри нумай предприятисем питех те сложнӑй заказсене ҫавтери кӗске вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртме май пуррине кӑтартса пачӗҫ. Ленинградецсем хальхи вӑхӑтра та ӗҫӗн вӑрҫӑлла хӑвӑртлӑхӗсен примерне параҫҫӗ. Ленинградри заводсенчен пӗринче ӗҫлекен конструкторсемпе технологсем Забунтуев, Григорьев, Хохлов, Пыжов тата ытти юлташсем ҫӗнӗ аггрегат проектне хатӗрлеме задани илнӗ. Икӗ кун иртсен вӗсем проекта йӑлтах хатӗрлесе панӑ, июлӗн 7-мӗшӗнче вара аггрегатӑн опытлӑ образецне те туса ҫитернӗ. Совет конструкторӗсем, техникӗсем, мастерӗсем пурте, производствӑна хӑвӑртлатассипе лайӑхлатасси камран килет—ҫавсем пурте ҫакӑн пек ӗҫлеме тивӗҫлӗ. Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар нумайрах самолетсем, танксем, тупӑсем, винтовкӑсем, пулеметсем, снарядсем тата ытти мӗнпур снаряженисемпе материалсем илӗ.

Нумайрах тени вӑл — ҫавӑн пекех лайӑхрах тенине те пӗлтерет. Лайӑхрах самолет, чӑтӑмлӑ танк тӑшмансене нумайрах пӗтерет. Совет самолечӗсен чаплӑ пахалӑхне фашистсен летчикӗсем хӑйсен хуйхӑллӑ опытӗнче курса ӗненчӗҫ. Хӑюллӑхпа паттӑрлӑхӑн тӗлӗнмелле чаплӑ ӗҫӗсене кӑтартнӑ геройсем, отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн пирвайхи геройӗсем, Совет Союзӗн Геройӗсем — Здоровцев, Жуков, Харитонов юлташсем фашистла ҫӑхансене пулеметсенчен персе пӗтере-пӗтере тӑкнӑ кӑна мар, тӑшмансене вӗсем хӑйсен машинисен корпусӗсемпе тӑрӑнтарса ҫӗмӗрнӗ, вӗсене машинӑсен винтисемпе касса туранӑ. Ҫак чаплӑ та паттӑр ӗҫсенче сталинла питомецсен вӗҫеври тӗлӗнмелле чаплӑ мастерлӑхӗ те, совет самолечӗсен пысӑк пахалӑхӗ те палӑрчӗ. Хамӑрӑн хӑюллӑ та паттӑр боецсене чи лайӑх та ҫӗнӗ оружипе хӗҫпӑшаллантармалла — ҫакӑн пек ӗнтӗ тылӑн, урӑхла каласан, рабочисемпе ученӑйсен, конструкторсемпе мастерсен, инженерсемпе лаборантсен, технологсемпе исследовательсен чи пысӑк та кирлӗ обязанноҫӗсенчен пӗри.

Нумайрах самолетсем, танксем, винтовкӑсем, пулеметсем тени вӑл — нумайрах металл, нумайрах руда тенине пӗлтерет. Металлургсемпе горняксем тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫлӗхне пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Анчах та металл ванчӑкӗсене пухас ӗҫе кирлӗ пек организациленӗ пулсан вӗсем чылай нумайрах металл пама пултарнӑ пулӗччӗҫ. Кунта пирӗн рессурсем калама ҫук пысӑк, вӗсем хулара кӑна мар, ялта та пур. Куйбышев облаҫӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхозра металл ванчӑкӗсене пухнипе пирвайхи кунсенчех виҫӗ тонна панӑ, «Могучий богатырь» колхозра 20 тонна, Каменный Брод МТС-ӗнче — 70 тоннӑна ҫити.

Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн кашни гражданинӗ ҫакна уҫҫӑн ӑнланса тӑма тивӗҫлӗ: металл ванчӑкӗсем пухма пулӑшса, вӑл тӑшмана ҫӗнтерме пулӑшать.

Хӗрлӗ Ҫар валли чи лайӑх вооружени нумай кирлӗ. Ӑна вӑл илсе тӑрать тата малашне те нумайрах та нумайрах илсе тӑрӗ. Вӑрҫӑн пирвайхи сакӑр кунӗ хушшинчех нимӗҫсен 1.500 самолет тата 2.500 танк пӗтрӗ. Эпир ҫапнин вӑйӗ кашни кун ӳссе пырать тата малашне те кунсеренех ӳссе пырӗ. Фашистсен танкӗсене, тупписене, самолечӗсене хирӗҫ эпир хамӑрӑн советӑн пурне те ҫӗмӗрсе тӑкакан танкӗсене, инҫете перекен тупписене, хӑвӑрт вӗҫекен самолечӗсене кӑларатпӑр.

Пирӗн ресурссем вӗҫӗ-хӗррисӗр нумай. Пирӗн халӑхӑн патриотизмӗпе хастарлӑхӗ — вӗҫӗ-хӗррисӗр. Унӑн тӑшмана ҫӗнтерес ирӗк-кӑмӑлӗ никам ҫӗмӗрейми ҫирӗп, унӑн энергийӗ иксӗлми пысӑк. Ҫак вӑйсем ҫав тери нумай вооружени тата снаряжени туса кӑларма пултараҫҫӗ, вӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн нушисене ытлашшипех тивӗҫтереҫҫӗ. Ҫавӑн пекех халӑх ополченине те кучухнехи вӑрҫӑ техникин мӗнпур правилисем тӑрӑх хӗҫпӑшаллантараҫҫӗ, тӑшман тылӗнчи партизансем валли пулеметсем, винтовкӑсем, штыксемпе хӗҫсем ҫителӗксӗр пулас ҫук. Вутҫулӑмпа тата металлпа ҫӗмӗрсе тӑшмана шӑлса ывӑтатпӑр, кӗл туса вӗҫтеретпӗрех.

Яланах асра тытар: кашни ҫӗнӗ танк, самолет, тупӑ, кашни снаряд тата пуля тӑшмана ҫӗнтермелли сехете ҫывхартаҫҫӗ. Планран ирттерсе туса кӑларнӑ продукцин кашни процентӗ — тӑшман ҫине ҫӗнӗрен пырса ҫапни пулса тӑрать.

Ҫулпуҫ чӗнни ҫине ответлесе ҫӗршыв пӗр ҫын пек пулса ҫапла калать: йӑлтах фронт валли.

— Винтовкӑсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах парар! Фашистла ирсӗр ҫӗлен-калтана таптаса лапчӑтма мӗн чухлӗ вооружени кирлӗ, ҫавӑн чухлӗ парар!

(«Правда» умстатьи, июлӗн 11-мӗш).

Ҫӗршывӑн оборона фондне

Шупашкар, Парти Обкомне

Колхозсем тата ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансем ыйтнӑ тӑрӑх, Чкаловски райсовет исполкомӗ тата парти райкомӗ ҫуракине кӑтартуллӑн ирттернӗшӗн пирӗн района панӑ премине—8 пин тенкӗ укҫана ҫӗршывӑн оборона фондне хываҫҫӗ. Фашистла ирсӗрсене пӗтӗмпех тата хӑвӑртрах пӗтерес кӗрешӳре Хӗрлӗ Ҫара пур майсемпе те ҫирӗплетсе пырӑпӑр. Колхозниксем ялхуҫалӑхӗн пур ӗҫӗсене те ӑнаҫлӑн вӗҫлеме тата государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарма пулаҫҫӗ.

Парти райкомӗн секретарӗ
ВАЛЕЕВ.
Райсовет исполкомӗн председателӗ **ШАРАФУТДИНОВ.**

Совет Информаци Бюровӗнчен

(Июлӗн 10-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ)

Июлӗн 10-мӗшӗнче фронтра ытлашши пысӑк ӗҫсемех пулса иртмен.

Пирӗн авиаци ҫак кун кунӗпех Остров тата Новоград-Волынск енӗсенче противникӑн мотомехчаҫӗсене пыра-пыра ҫапнӑ, Западная Двина юханшывӗ урлӑ каҫмалли переправӑсенче противник войскисене пӗтерсе тӑкнӑ тата унӑн аэродромӗсенчи авиаци ҫине атакӑланӑ.

Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата аэродромсем ҫине пырса тапӑнса, пирӗн авиаци нимӗҫсен 28 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ, пирӗн 6 самолет пӗтнӗ.

* * *

Противникӑн танковӑй пысӑк вӑйӗсем Н-ски соединенине хирӗҫ сылтӑм флангран хаяр наступлени пуҫланӑ. Пирӗн артиллери тӑшман танкӗсем ҫине ҫийӗнчех пит вӑйлӑн пеме пуҫланӑ. Артиллерирен вӑйлӑн персе тӑнине чӑтаймасӑр, противник каялла чакнӑ, ҫапӑҫу пулнӑ вырӑнта унӑнне 70 танка ҫиги ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Ӗҫ ӑнаҫлӑн пулманшӑн тарӑхса, тӑшман пирӗн позицисем ҫине артиллерирен персе тӑнӑ, унтан вара иккӗмӗш хут атака тунӑ. Артиллерирен пенипе тата совет бомбардировщикӗсем бомбӑсем вӑйлӑн пӑрахнипе, противникӑнне каллех вунӑшар танк ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, анчах ытти танкӗсем, линие татса, пирӗн чаҫсене кӑштах хӗстернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Германи войскисен пехотнӑй дивизийӗ атакӑна тухнӑ. Пирӗн вӑхӑтра пырса ҫитме ӗлкӗрнӗ танксемпе моторизованнӑй чаҫсем фашистсен дивизине йӗри-тавра хупӑрласа илнӗ, ӑна йӗркеленме паман. Ҫапӑҫура — унта пирӗн сывлӑшри вӑйсем те хутшӑннӑ, — Германи дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Пирӗн чаҫсем юсавлӑ орудисем 28, занитнӑй хӑватлӑ установкӑсем 8, пулеметсемпе автоматлӑ хӗҫпӑшалсем нумай туртса илнӗ, 30 автомашина тата 54 мотоциклет туртса илнӗ. Ҫапӑҫу пулнӑ вырӑнта нимӗҫ салтакӗсем 3.500 ҫын ытла вилнӗ тата аманнӑ. Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 2.400 ҫынна яхӑн тыткӑна илнӗ.

* * *

Старший сержант Г. Найдинӑн лайӑх маскировка тунӑ танкӗ вӑрман хӗрринче тӑнӑ. Совет танкисчӗсем тӑшмана сӑнанӑ. Ҫул ҫинче фашистсен танкӗсен колонни курӑннӑ. Вӗсене ҫывӑха ярса, Найдин малтанхи хут персех малта пыракан танкне ҫӗмӗрнӗ. Тӑшман машинин моторӗ ӗҫлеме чарӑннӑ та вӑл ансӑр ҫула картласа лартнӑ. Нимӗҫ водителӗсем каялла ҫаврӑнма хӑтланнӑ, анчах та Найдин нимӗҫсен хыҫалта пыракан танкне те персе ҫӗмӗрнӗ. 12 танкран 10 танкне кӑшӑла ҫаврӑрса илнӗ: малта та, хыҫалта та танксем ҫуннӑ, икӗ енче шурлӑхлӑ тарӑн вырӑн пулнӑ. Нимӗҫ танкисчӗсем нимӗн тума пӗлмесӗр арпашӑнса кайнипе усӑ курса, Найдин юлташ тата башня ҫинчи стрелок Копытов тӑшман ҫине снаряд хыҫҫӑн снаряд кӑларса янӑ. Ҫапла вара советӑн пӗр танкӗ фашистсен 12 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Белофинсем пирӗн войскӑсене хирӗҫ десант антарма хатӗрленнӗ. Заливри утравсенчен пӗрин ҫине вӗсем хӑйсен вӑйӗсене пухма пуҫланӑ. Балтий тинӗсӗнчи ҫыранри Н-ски чаҫӗн боецӗсемпе командирӗсене десант антармашкӑн чӑрмантарма тата белофинсене пӗтерсе тӑкма приказ панӑ. Совет боецӗсем ҫулсӑр вырӑнсемпе, чӑнкӑ сӑртсем урлӑ ҫӗнӗ огневой позицисене тупӑсем илсе пырса вырнаҫтарнӑ. Балтиецсем артиллерирен персе белофинсене пӗтерсе тӑкнӑ. Утрав ҫинче белофинсен вилнисемпе аманнисем 350 ҫын ытла выртса юлнӑ, ыттисем тарнӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫар паттӑррӑн ҫапӑҫни Германи фашисчӗсене ҫав тери хыттӑн тарӑхтарать. Хӑйсен хаяр тарӑхӑвне вӗсем аманнӑ красноармеецсем тӗлӗшпе тавӑрма хӑтланаҫҫӗ. Нимӗҫ истребителӗсем, хӑлатсем пекех, ҫапӑҫу пулнӑ ҫӗрте аманнисене пуҫтаракан уйрӑм санитарсем ҫине те тапӑнаҫҫӗ. Поставы хулинче фашистсен ҫӑмӑл бомбардировщикӗ аманнӑ красноармеецсене носилкӑсемпе илсе тухакан санитарсем ҫине пулеметран пенӗ, санитарсем ҫинче хӗрлӗ хӗресӗн паллисене нимӗҫ летчикӗ лайӑххӑнах курнӑ пулнӑ. Фашистсем уйрӑмӑнах аманнӑ красноармеецсем, тыткӑна лекнӗ красноармеецсем тӗлӗшпе питех те тискер ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Гитлерӑн ирсӗр тыткӑнӗнчен тарса тухнӑ сержант И. Караев фашистсем тыткӑна лекнӗ тата йывӑр аманнӑ красноармеец тӗлӗшпе питех те тискер ӗҫ тунине курнӑ. Аманнӑ пӗр боец вӑрҫӑ ҫинчен панӑ ыйтусене хирӗҫ нимӗн те каласа паман, ҫакӑншӑн офицер приказӗ тӑрӑх унӑн аллисене касса татнӑ тата куҫӗсене тӗксе шӑтарнӑ. Ытти виҫӗ красноармееца, юн кайнипе ӑнран кайнӑскерсене, палачсем вӗри шывпа пӗсертнӗ, кайран штыксемпе чиксе вӗлернӗ.

* * *

Н. хулинчен 80 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ енче партизансен отрячӗ ҫӗрле нимӗҫсем йышӑннӑ яла пырса кӗнӗ. Часовойсене шӑппӑн пӗтерсе хунӑ хыҫҫӑн, отряд ялта ҫывӑракан мотоциклетлӑ чаҫри салтаксем ҫине тапӑннӑ. Германин 12 мотоциклисчӗ ҫеҫ тарса пытанма пултарнӑ, 74 салтака тата 2 офицере вӗлернӗ. 62 мотоцикла пӗтерсе тӑкса, партизансем ялтан тухса кайнӑ.

* * *

Июлӗн 9-мӗшӗнче, Н-ски енче, пирӗн войскӑсем противникӑн пысӑк соединенийӗсене хирӗҫ контратакӑсем тунӑ хыҫҫӑн, санитарсем ҫапӑҫу пулнӑ вырӑнта нимӗҫсен аманнӑ салтакӗсене 100 ҫын ытла пухнӑ. Аманнисен шутӗнче Германин инженернӑй чаҫӗсенчи салтаксен группи те пулнӑ. Салтаксене апат ҫитернӗ тата медицина енӗпе пулӑшу панӑ хыҫҫӑн, вӗсем ҫапла каласа панӑ: вӗсен чаҫӗ Францин ҫурҫӗр ҫыранӗнче тӑнӑ, иртнӗ ҫулта Англие нимӗҫсен десантне антарас тӗлӗшпе хатӗрленӳллӗ ӗҫсене туса пынӑ. «Хӗвелтухӑҫри фронтра вӑрҫӑ пуҫланиччен икӗ эрне маларах, — каласа парать Петер К. ятлӑ салтак, — пире ытти войскӑсемпе пӗрле хӗвелтухӑҫри фронта илсе кайрӗҫ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн малтанхи кунсенче офицерсем салтаксене ҫапла шантаратчӗҫ: нимӗҫсем большевиксене 10 кун хушшинчех пӗтерсе тӑкӗҫ, ун хыҫҫӑн вара август уйӑхӗнче Лондонра апатланмалла пулӗ. Анчах та пирӗн офицерсен ӗмӗчӗсем йӑлтах арканса кайрӗҫ. Хӗвелтухӑҫ фронтне пирӗн чаҫсем ҫеҫ мар, тата Сент-Омерти инженернӑй пысӑк чаҫсем те пырса ҫитрӗҫ. Вӑрҫӑ хӑҫан вӗҫленесси пӑхса та курӑнмасть».

* * *

Шанчӑклӑ ҫӗртен илнӗ даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫ командованийӗ Германипе Швейцари хушшинчи чикӗри войскӑсене пурне те урӑх вырӑна куҫарнӑ, вӗсен вырӑнне ватӑ ҫынсемпе инвалидсене хӑварнӑ.

* * *

Совет ҫӗршывӗнчи нумай миллионлӑ интеллигенци тӑван ҫӗршыва кӑкӑрпа хӳтлеме тӑчӗ. Технически наукӑсен докторӗ Филоненко юлташ пуҫарнипе, Ивановӑри энергоинститутри профессорсемпе преподавательсем каникул вӑхӑтӗнче облаҫри промышленноҫлӑ предприятисенче ӗҫлеме йышӑннӑ. Совет Союзӗнчи тахҫантанпах ӗҫлекен общество — Харьковри медицина обществи, Сталин сӑмахӗ ҫине ответлесе, квалификациллӗ специалистсене нумайӗшне Хӗрлӗ Ҫарӑн лазаречӗсемпе госпиталӗсене ярать. Общество правленине кашни кунах паллӑ ученӑйсем пыраҫҫӗ, вӗсем хӑйсен пӗлӗвӗсемпе усӑ курма сӗнеҫҫӗ. Ҫавӑн пек патриотсен—ученӑйсен шутӗнче Шевандин, Юдин, Марзеев, Гофунг, Гаспарян профессорсем тата ыттисем те пур. Мускаври Тимирязев ячӗпе тӑракан академири пин ытла студент колхозсенче агрономсем, комбайнерсемпе трактористсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Казах республикинче студентсемпе вӑтам шкулсенче вӗренекенсем, пурӗ 80 пин ҫын, ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеме кайнӑ.

Ҫамрӑк патриотсем НКВД органӗсене гитлерла шпионсемпе диверсантсене тытма пулӑшаҫҫӗ. К. хули ҫӗрлехи тӗттӗмлӗхре тӑнӑ. Вырӑнти гостиницӑри пӗр чӳречерен тата хулари тӗрлӗ вырӑнсенче вырнаҫнӑ тепӗр икӗ суртӑн чӳречисенчен ҫеҫ ҫутӑ курӑннӑ. Владимир Косинский взводӗнчи вӗренекенсем сигнализаципе ӗҫлекен тӑшмансене сӑнанӑ та вӗсем ҫинчен милицие пӗлтернӗ. Тӑшманӑн виҫӗ постне ҫийӗнчех пӗтерсе тӑкнӑ. Хула тулашӗнчи участок тӑрӑх пӑхса ҫаврӑннӑ чухне ҫак взводри икӗ дружинник йывӑҫ тӗмисем ӑшне пытанакан ҫынна асӑрханӑ, ҫакӑн ҫинчен милиционера пӗлтернӗ. Ҫав паллӑ мар ҫын диверсант пулнӑ, ӑна арестленӗ.

Совет Союзӗн ҫар миссийӗ Лондонра

ЛОНДОН, июлӗн 10-мӗш. Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Совет Союзӗн ҫар мисси членӗсем паян Англин тинӗс министерствинче пулнӑ, унта вӗсене тинӗс ӗҫӗсен министрӗ Александер йышӑннӑ. Унта пулнӑ хыҫҫӑн авиаци министерствине кайнӑ, вӗсене унта авиаци министрӗ Синклер йышӑннӑ.

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

(Июлӗн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ)

Июлӗн 11-мӗш ыран тенӗ чухне ҫӗрле фронтра ытлашши нимӗнле пысӑк ӗҫсемех те пулса иртмен. Пирӗн авиаци противникӑн мотомехчаҫӗсене пӗтерес тӗлӗшпе вӑрҫӑ ӗҫӗсем тунӑ, унӑн аэродромӗсем ҫине пыра-пыра тапӑннӑ.

Тӗплӗн шута илнӗ тӑрӑх, июлӗн 10-мӗшӗнче пирӗн авиаци сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата аэродромсенче нимӗҫсен 58 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ, хамӑрӑн 9 самолет пӗтнӗ.

Оборонӑн Государственнӑй Комитетӗнче

Вӑрҫӑ операцийӗсем виҫӗ тӗп вырӑнта пулса пыни палӑрнине кура, тӑшмана отпор парас шутпа Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ Верховнӑй Командованин Ставкине виҫӗ Главнӑй Командовани: Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ, Хӗвеланӑҫ, Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ Главнӑй Командованийӗсене организацилеме хушнӑ.

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ енчи войскӑсен Главнокомандующийӗ пулма Совет Союзӗн Маршалне К. ВОРОШИЛОВ юлташа уйӑрса лартнӑ.

Хӗвеланӑҫ енчи войскӑсен Главнокомандующийӗ пулма Совет Союзӗн Маршалне Оборона Халӑх Комиссарне С. ТИМОШЕНКО юлташа уйӑрса лартнӑ.

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ енчи войскӑсен Главнокомандующийӗ пулма Совет Союзӗн Маршалне С. БУДЕННЫЙ юлташа уйӑрса лартнӑ.

ВОРОШИЛОВ юлташ, ТИМОШЕНКО юлташ тата БУДЕННЫЙ юлташ войскӑсен командованине хӑйсем ҫине илнӗ те ӗнтӗ.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. КАЛИНИН юлташ США Президенчӗ г-н РУЗВЕЛЬТ патне янӑ

ТЕЛЕГРАММА

Господин Франклин Д. Рузвельта—Америкӑри Пӗрлешӳллӗ
Штатсен Президентне.
Вашингтон, Шурӑ Ҫурт.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен никама пӑхӑнмасӑр пурӑнас положенийӗ ҫинчен пӗлтернӗ ятпа иртекен Сирӗн национальнӑй праздник кунӗнче, Сире, Господин Президент, Германин фашистла правителӗсен ушкӑнне хирӗҫ — мӗнпур прогрессивлӑ этемлӗхӗн тӑшманӗсене хирӗҫ хӑйӗн ирӗклӗхӗшӗн алла хӗҫпӑшал тытса кӗрешекен Совет Союзӗ тата нумай нациллӗ мӗнпур совет халӑхӗ пӗтӗм чӗререн сывлӑх сунса саламланине йышӑнма ыйтатӑп.

Сире Хӑвӑра, Господин Президент, телей тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен аслӑ халӑхне чечекленсе пыма сунатӑп.

М. КАЛИНИН.

1941 ҫулти июлӗн 4-мӗш.

США Президенчӗ г-н Рузвельт СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. КАЛИНИН юлташ патне янӑ

ТЕЛЕГРАММА

Унӑн Превосходительствине Михаил Калинина,
Верховный Совет Президиумӗн Председательне.
Мускав.

Пӗрлешӳллӗ Штатсен никама пӑхӑнмасӑр пурӑнас положенийӗ пуҫланнине паллӑ тӑвакан уяв ячӗпе Эсир сывлӑх тата чи лайӑх ырлӑхсем сунса янӑ кӑмӑллӑ телеграммӑна илтӗм. Сирӗн саламшӑн, ырӑс халӑхӗ тискер захватчике хирӗҫ ҫав тери паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра ҫав посланине ярса саламланӑшӑн тарӑнӑн тав тӑватӑп.

Америка халӑхӗ хӗҫпӑшаллӑ агресси ҫине кураймасӑр пӑхать. Вӑл ырӑс халӑхӗпе историллӗ ҫирӗп туслӑхпа ҫыхӑнса тӑрать, ҫавӑнпа та вӑл ырӑс халӑхӗ хальхи вӑхӑтра хӑйне хӳтлес тӗллевсемпе паттӑррӑн кӗрешнине чӗререн кӑмӑлласа тата савӑнса сӑнаса тӑрать.

Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви тата халӑхӗ ячӗпе, ҫавӑн пекех тата хамӑн ятпа, эпӗ Эсир туслӑн саламланӑшӑн Сире тав тӑватӑп. Эпӗ Сире чи лайӑх ырлӑх сунатӑп, ырӑс халӑхне ырлӑхлӑ пулма тата ҫитӗнӳсем тума сунатӑп.

Франклин Д. РУЗВЕЛЬТ.

1941 ҫулти июлӗн 10-мӗш.

Хӗрлӗ Ҫара конкретлӑ ӗҫпе пулӑшни

СОВЕТСКОЕ. Килдӗшри Степан Разин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ, ВКП(б) членӗн кандидачӗ Соловьев юлташ колхоза оборона крепоҫӗ туса хурас тӗлӗшпе питӗ тӑрӑшса ӗҫлет. Колхозниксемпе колхозницӑсем мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара мӗн вӑй ҫитнӗ таран пулӑшма, государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен парса татма тӑрӑшаҫҫӗ. Сӗт-ҫу, ҫӑмарта, аш-какай тата ҫӑм обязательствисене колхоз пӗтӗмпех тултарнӑ, 75 центнер тырӑ панӑ.

Колхозниксен колхоз производствинче ӗҫлес хастарлӑхӗ татах ҫӗкленчӗ. Колхозниксем пурте колхоз производствинче, строительствӑра, вӑрман касса хатӗрлес ӗҫре, кирпӗч тунӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрарӑмсемпе шкул ачисем те ҫум ҫумлас, тислӗк тӑкас, итемсене тасатас ӗҫре хӑйсен кулленхи ӗҫ нормисене ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ.

Колхоз йышлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн тата унӑн продуктивлӑхне хӑпартассишӗн тӑрӑшать. Государство планӗ тӑрӑх фермӑра 140 пуҫ сысна пулмалла пулсан, паянхи куна 286 пуҫа ҫитнӗ. Ытти выльӑхсем те планпа пӑхнинчен нумай. Выльӑх-чӗрлӗх пӑхас ӗҫре уйрӑмӑнах техник-животноводсен курсӗнчен вӗренсе тухнӑ Лебедева юлташ паха тӗслӗхсем кӑтартать. Вӑл ӗҫлеме пуҫланӑранпа фермӑра пӗр сысна та вилмен.

Колхозра пахча-ҫимӗҫ бригади организациленӗ, унта 7 ҫын. Ку бригадӑна Авакумов юлташ ертсе пырать. Ку бригада кӑҫал 2,50 гектар ҫӗр ҫине тӗрлӗрен пахча-ҫимӗҫсем лартнӑ.

Колхоз уйри тырпула пӗр тӑкаксӑр тата кӗске срокра пухса кӗртме лайӑх хатӗрленнӗ. Ялхуҫалӑх машинисем юсавлӑ, складсене дезинфекциленӗ. Кӗрхине хатӗрленнӗ май уя 5 пин лав ытла тислӗк кӑларнӑ.

Колхозра политикӑллӑ агитаци ӗҫне те лайӑх туса пыраҫҫӗ. Колхоз председателӗ Соловьев, ялсовет председателӗ Малиновский, учительсем Столяров, Сироткин юлташсем хальхи событисем ҫинчен колхозниксем ӗҫленӗ ҫӗре кайса ӑнлантарса параҫҫӗ. Колхозра радиона коллективлӑн итлессине организациленӗ.

Ордашри «Красный Октябрь» колхозра та ӗҫ дисциплини ҫирӗп. Колхоз паянхи куна ҫӗртме сухине сухаласа пӗтернӗ. Уйри тырпула кӗске срокра пухса кӗртме хатӗрленсе ҫитнӗ, государствӑна тырӑ пӗтӗмпех парса татнӑ. Халӗ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма 10 лаша уйӑрнӑ, вӗсене уйрӑмӑн пӑхма тытӑннӑ.

Государство умӗнчи парӑмсене срокчен парса татнӑ, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма лашасем уйӑрса вӗсене лайӑх апат ҫине тӑратнӑ колхозсем районра татах та нумай. Районӗпе паянхи кун тӗлне 2 пин центнер ытла государствӑна тырӑ леҫсе панӑ. Колхозниксемпе колхозницӑсем пурте, мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарпа пӗр шухӑшлӑ пулса, фашистла Германин ирсӗр бандисене хӑвӑртрах пӗтерсе тӑкассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Н. МИХЕЕВ.

Аванс шучӗпе страховка укҫи тӳлеҫҫӗ

ЭЛӖК. Чылай колхозсем тата колхозниксем государство умӗнчи обязательствӑсене срокченех пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ. Анатри Елӑшри колхозник П. Жуков, Тури Елӑшри С. Михайлов, Уҫӑпкассинчи А. Кононов, Анатри-Панклинчи Н. Степановпа П. Степанов юлташсем 1942 ҫулшӑн страховка укҫи тӳлесе татрӗҫ.

Н. МИРОНОВ.

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Диверсантсене пĕтерсе тăкнă

Тăрă та хĕвеллĕ кун тăнă. Çыхăну Павлов юлташ командир пулса ертсе пыракан Н-ски подразделенийĕ тăшман авиацийĕ вăйлăн персе тăнă вăхăтрах лини карнă, шанчăклă çыхăну туса хунă. Часах связистсем пĕлтерӳ илнĕ: вĕсенчен инçех мар вырăнта фашистсен виçĕ самолечĕ парашютпа десант антарнă. Боецсем çийĕнчех группа уйăрнă та ăна диверсантсене пĕтерсе тăкма янă.

Связистсем шыв кӳлленсе тăнă вырăна чупса çитсен, çав тĕлте, çиле май сулкаланса, диверсантсем парашютсемпе аннă.

—Епле сулкаланаççĕ-ха,—тенĕ боец Василий Карякин,—авиаци праздникĕнчи пекех. Эпир сире çавăн пек праздник туянтарăпăр, ăна ситех йышăнас килмĕ.

Тăшман парашютисчĕсем çĕр çумнелле çывхарса çитме пуçласан, связистсем вĕсем çине винтовкăсенчен пеме пуçланă. Сывлăшра пĕтерсе тăкманнисене связистсем çĕр çине анса ларсан пĕтерсе хунă.

Боец Василий Карякин унран инçех мар вырăнта фашистсен парашютисчĕ аннине асăрханă, тăшман урисем çĕр çумне çитсе тăрсан, вăл тӳрех ун çине ыткăннă та, ăна штыкпа чиксе вĕлернĕ. Çывăхрах тата тепĕр парашютист анса ларнă. Анчах ăна та çийĕнчех пĕтерсе тăкнă.

— Çапса çĕмĕрсе тăкăр вĕсене, ылханлă çĕлен-калтасене! —тесе кăшкăрнă Карякин хăйĕн тусĕсене. Унăн тусĕсем те, Карякин пекех, диверсантсене хăвăрт пĕтерсе тăкнă.

Парашютистсем НКВД войскисен тата милици формипе пулнă, хăшпĕрисем гражданла халăх пек тумланнă.

Парашютистсем хушшинче тăватă хĕрарăм пулнă, вĕсем милици формипе тумланнă. Хулпуççисем çине сумкăсем çакнă. Çав сумкăсенче, хĕрарăм кĕписемсĕр пуçне, автоматла пистолетсем выртнă. Арçын-диверсантсен, хăйсен личнăй хĕçпăшалĕсĕр пуçне, ручной пулеметсемпе танксене хирĕç пемелли винтовкăсем пулнă.

Диверсантсемпе пĕрле самолет çинчен радиоустановкăсене те пăрахнă, вĕсемпе фашистсен командованийĕпе çыхăнса тăрас тĕлĕшпе усă курма пăхнă пулмалла. Анчах диверсантсем çав установкăсемпе усă курма пултарайман, вĕсене йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Çав кунах связистсем диверсантсен тепĕр ушкăнне тĕл пулнă, вĕсем пирĕн тыла анса ларнă пулнă. Тумланасса милици формипе тумланнă. Вĕсене тытса чарсан, вĕсем вырăс чĕлхипе:

— Эпир çула сыхласа тăратпăр,—тесе каланă.

— Камран сыхлатăр ăна?—ыйтнă боецсем.

— Тăшмансенчен.

— Сирĕн тăшмансем камсем?

— Нимĕçсем.

Пирĕн боецсемпе командирсем, вĕсен кулăшла сăмахĕсенчен чăтаймасăр кулма пуçланă. Боецсенчен пĕри çапла ыйтнă:

—Мĕнле-ха вара эсир нимĕçсене хирĕç хăвăр алăри нимĕç хĕçпăшалĕсемпех кĕрешетĕр?

Диверсантсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

Г. МИШУЛОВИН.

«Известия» спецкорĕ.
Действующи арми, июлĕн 8-мĕш.

Нимĕçсем сывлăшри çапăçуран пăрăнаççĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Кондрашов командир пулса ертсе пыракан авиаци подразделенийĕн боевой опычĕ çакна кăтартса парать. нимĕç летчикĕсем, правило пекех, пирĕн истребительсене тĕл пулма хăраççĕ, час-часах çапăçăва хутшăнмасăрах, каялла çавăрăнса каяççĕ.

Разведка çакăн çинчен пĕлтернĕ: тăшманăн пилĕк бомбардировщикĕ Л. пункт еннелле вĕçсе пынă, çав пункт подразделени вырнаçнă вырăнтан инçе мар пулнă. Пирĕн çичĕ истребитель тăшмана хирĕç вĕçсе çĕкленнĕ. Нимĕçсен самолечĕсене тупса палăртсан, истребительсем вĕсене татăклăн атакăланă. Фашистсен летчикĕсем çапăçуран пăрăннă. Газа пысăккăн парса, вĕсем хăйсен базисем еннелле çавăрăннă. Часах пĕр бомбардировщика персе антарнă.

Истребительсем аэродрома таврăннă. Кунта вĕсем нумаях тăман. Пĕлĕтелле ракета хăпарса кайнă, вĕсем каллех сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Ку расра аэродром патнелле тăшманăн тăхăр бомбардировщикĕ вĕçсе пынă. Фашистсене хирĕç çапăçма чи малтан Кондрашов юлташ ертсе пыракан виçĕ истребитель пуçланă. Тăшмана пĕр вăхăтрах виçĕ енчен атакăланă. Пĕр бомбардировщик, персе çĕмĕрнипе, йывăç çине ӳкнĕ. Ыттисем каялла тарнă.

Тепĕр хут пырса тапăнма хăтланнă чухне нимĕçсем разведка тăвакан икĕ самолета мала янă. Анчах та çав машинăсем иккĕшĕ те каялла таврăнайман: пĕрне пирĕн зенитчиксем персе антарнă, иккĕмĕшне — Кондрашов тата унăн боевой летчикĕсем Фокинпа Волосюк сывлăшра персе çĕмĕрнĕ.

Хăюллă разведчик Беляков

Тупăсем кĕрлеççĕ, тăшман хаяррăн тапăнса килет. Пирĕн чаçсем фашистсене тăвăллă вутпа кĕтсе илчĕç. Темиçе сехет ĕнтĕ пырать çак вăйлă çапăçу, нимĕçсем вуншар хутчен атакăна кĕрсе пăхрĕç, анчах совет хĕçпăшалĕ сапакан тăхлан çăмăра тӳсеймесĕр кашнинчех каялла чакрĕç.

Акă ĕнтĕ вĕсен тапăнса килес чăрсăрлăхĕ хавшарĕ пулас. Тăшман вăрман хĕрринчи хӳтлĕхе йăпшăнса выртрĕ те сасартăках пеме чарăнчĕ. Шăп.

«Тĕлĕнмелле, — шухăшларĕ командир, — çав бандитсем темĕскер кĕтмен ирсĕрлĕх хатĕрлемеççĕ-ши?

Командир хăй патне Беляков сержанта чĕнсе илчĕ.

— Сержант юлташ! Хăвăрпа пĕрле икĕ боеца илĕр те тăшманăн вут сапакан йăвисем ăçта вырнаçнине тупса палăртăр.

— Есть! Хушнă ĕçе тăвăпăр!..

Разведчиксем хăйсем çине лаштра та симĕс çулçăллă йывăç тураттисем çакса, малалла шума пуçларĕç. Акă вĕсем пирĕн пехотăн малти линийĕнчен шуса иртсе кайрĕç. Умра—вăрман. Унта — тăшман. Анчах хăш тĕле вырнаçнă вăл?

Беляков хăйпе пĕрле шăвакан икĕ разведчика чарăнса пытанма хушрĕ, хăй çав вăхăтра вĕтĕ йывăç тĕмисемпе витĕннĕ пысăк мар сăртлăха шуса хăпарса, бинокль витĕр умри вырăна сăнама тытăнчĕ.

Таврара нимĕнле амак та палăрман Чĕмсĕр вăрман, пушă уйхир. Анчах авă, таçта сылтăмра, винтовкăран пенĕ вут ялтлатса илчĕ.

«Кунта!» — шухăшларĕ сержант.

Вăл хыçри разведчиксене сигнал пачĕ те, вĕсем çĕнĕрен малалла шăва пуçларĕç. Вĕсем, симĕс çулçăпа витĕннĕскерсем, кашни йывăç тĕмипе, кашни тĕмескепе усă курса, шăваççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем тăшман йышăннă вырăн патне çывхарса пычĕç.

Çав вăхăтра пирĕн подразделени, тăшман тимлĕхне хăюллă разведчиксенчен аяккалла сирес тесе, противник çине вут тăкма тытăнчĕ.

Фашистсем пĕр самантлăха чĕнмерĕç, унтан хускалчĕç те хирĕç пеме пуçларĕç.

Разведчиксем хăвăртрах малалла шуса кайрĕç. Вĕсен куçне противникăн вут сапакан йăвисем уçăмлăнрах курăнма пуçларĕç. Анчах пурте мар. Таçтан, куçа курăнман пулемет кĕске черетсемпе вĕçĕмсĕр вут тăкать. Пулемет ăçта вырнаçнине палăртмаллах!

Сержант Беляков тăшман патне тата çывăхрах шуса пыма шут тытрĕ. Хуллен те асăрханса, кашни сас-чĕве тимлĕн итлесе шăвать вăл. Сасартăк ун хăлхине çын сассисем илтĕнсе каяççĕ, сăмахĕсем ăнланмалла мар.

— Фашистсем! — татăклăн шухăшлать Беляков.

Чăн та, ун патĕнчен пĕр вунă метрта, тупă йĕтри алтса хăварнă лакăмра, тăшмансем лараççĕ. Беляков вĕсенчен кăшт аяккарах пăрăнса, çаплах малалла шăвать. Вăрман хĕррине çитсен чарăнать. Халĕ ĕнтĕ вăл тăшман вырнаçнă çĕртех.

Беляков, хăй шыранă вут йăви ăçта вырнаçнине паллă тăвать те, каялла чакма тытăнать.

Анчах, Беляковпа унăн юлташĕсем çирĕм метр та каялла шăваймаççĕ, унтан пăшал сассисем илтĕнсе каяççĕ. Тăшман хăюллă разведчиксене асăрхаса илнĕ. Вĕсем çине пуля çăмăрĕ тăвăллăн сапăнма пуçлать. Разведчиксем хирĕç переççĕ. Нимĕçсем çывхараççĕ, разведчиксене çавăрса илме пуçлаççĕ, ункă сыпăнса, хĕсĕнсе пырать. Боецсенчен пĕри вилет. Халĕ ĕнтĕ вĕсем иккĕнех юлаççĕ. Вĕсем тăшмансене пере-пере ӳкереççĕ.

Анчах разведчиксем иккĕн кăна, нимĕçсем — ик-виç теçетке. Ункă хĕсĕнсе пырать. Тăшман пульли иккĕмĕш боеца çапса ӳкерет. Беляков пĕр-пĕччен тăрса юлать.

— Суятăр, тытаймăр! — хаярланса калать сержант.

Вăл пысăк мар тĕмеске хӳтлĕхне вырнаçать те вĕçĕмрен вут тăкать. Фашистсем çывхараççĕ, вĕсем разведчика тыткăна илесшĕн пулас.

— Парăн! — кăшкăрчĕ такăшĕ нимĕçсенчен пĕри, кăнттамланса тухакан вырăс чĕлхипе.

— Ме хып! — тавăрчĕ Беляков.

Аллине вăйлăн сулса ярса, вăл тăшмансем çине умлăн-хыçлăн икĕ граната ывăтрĕ.

Хура юпасем пек тăпра вăркăнса çĕкленчĕ, кăшкăрнă, йынăшнă сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Беляков, тепĕр граната ывăтрĕ те, сăртлăхран хытă палтăртатса анса, йывăç тĕмисен хӳттине пытанкаласа, кунталла чупма тытăнчĕ. Анчах ăна тăшман хыçранах хăвалать: вăл разведчика мĕнле те пулин тыткăнах илесшĕн.

Беляков пытанчĕ. Нимĕçсем ăна вăрман хĕрринче шыраççĕ. Унта та, кунта та пĕрерĕн-пĕрерĕн пăшал пенĕ сасăсем илтĕнеççĕ. Хăш чухне тăшмансем Беляков патĕнчен инçех те мар иртсе каяççĕ, анчах ăна асăрхаймаççĕ — вăл, ешĕл çулçăпа витĕннĕскер, пĕр хускалмасăр выртать.

Тавралăх ерипен лăпланать. Нимĕçсем разведчика тупассине шанми пулчĕç тейĕн. Тата кăштах выртсан, Беляков хускалать те, чăрăна-чăрăна, таврари сас-чĕвĕсене итле-итле, ерипен хамăрăннисем патнелле шума тытăнать. Пĕр чун та çук тейĕн. Шăп.

Анчах вăл вăрмантан тухма ĕлкĕрет кăна, çавăнтах ун çине виçĕ енчен виçĕ нимĕç ывтăнать.

Вĕсенчен пĕрине Беляков çавăнтах персе ӳкерет.

Тепри сержант çине хыçалтан ывтăнать, унăн хулĕсенчен ярса тытса, ăна ӳпĕнтерме хăтланать. Фашиста çĕре сирсе пăрахса, Беляков ăна прикладпа çапса лапчăтать.

Виççĕмĕш нимĕçĕ, çакна курса, Беляковa пăшалпа персе пăрахма тăрать. Сержант, кăшт пĕшкĕнсе, нимĕç çине ывтăнать, унтан тăшман аллинчи винтовкăна туртса илсе, тăшмана штыкпа чиксе пăрахать.

Пăшал сассине илтнĕ нимĕçсем çапăçу пынă çĕре васкаççĕ. Кунтан мĕнле те пулин хăвăртрах шăвăнмалла Хырăмпа шуса, хушăран тăра-тăра чупса, чулсем хыçне, лапамсене пытанса, разведчик каялла, хамăрăннисем патне, васканă.

Унăн вăйĕ пĕтсе çитет, çак вăхăтрĕ вăл:

— Стой! Кам килет? — тенĕ сасă илтет.

Кусем хамăрăннисем пулнă.

Беляковa боецсем çавăрса илеççĕ, çĕклеççĕ, алă çинче йăтса каяççĕ ăна. Пĕр саманта вăл хускалмасăр выртать. Унтан вăл тăшмансем вырнаçса тăракан вăрман еннелле çавăрăнать те, кулкаласа:

— Ну, мĕнле? Туянтăр-и? — тет.

Беляков разведка результачĕсем çинчен командира хăвăрттăн та уçăмлăн каласа парать.

Командир хыттăн чăмăртать ун аллине.

— Тав тăватăп, сержант юлташ!

— Совет Союзне служить тăватăп!— тесе çивĕччĕн татса калать хăюллă разведчик.

Н. ЭПШТЕЙН,

Кĕçĕн политрук.
(«Красная звезда»)

Боевой вахтăсем

Застава нарядчĕ боевой вахтăра пулнă. Кĕçĕн сержант Тимченко, ефрейтор Щербаков, боец-пограничниксем малалла çивĕч пăхса тăнă. Вĕсем кашни сасса тимлĕн итленĕ.

Аякра мотор шавланă сасă илтĕннĕ.

— Тăшман!—тенĕ сержант.

Шурă пĕлĕтсем хушшинче пĕр пĕчĕк хура пăнчă курăннă. Вăл пысăкланса пынă. Фашистсен самолечĕ пирĕн тăван çĕршыв çине вĕçсе кĕме шутланă.

— Стервятник çине винтовкăран перетпĕр,—тесе йышăннă та пограничниксем, пеме тытăннă. Самолет кĕтмен çĕртен сулкаланма пуçланă. Çивчĕ куçлă пограничниксем фашистсен самолечĕ çине тӳрĕ персе тивретнĕ, вăл çĕр çинелле чул пек татăлса аннă.

Сержант Тимченко тата унăн боец-пограничникĕсем боевой вахтăрах юлнă.

* * *

...Кĕçĕн сержантăн Агафоновăн виçĕ çынтан тăракан нарядчĕ çине тăшман пырса тапăннă. Финсен ушкăнĕнче 40 çынран кая пулман.

Тăшмансем пирĕн виçĕ пограничника çавăрса илме ĕмĕтленнĕ. Боецсем финсен ултавлă шухăшне туйса илнĕ те, пеме тытăннă. Агафонов пуçран аманнă, анчах наряд хăйне валли çул уçса пынă. Аманнă командира боецсем заставăна çĕклесе çитернĕ.

Çав кунах, лейтенант Тишин заставин боевой охраненийĕ çине финсен батальонĕ пырса тапăннă. Пĕрпек мар вăйсен çапăçăвĕ пуçланса кайнă. Хăюллă охраненине пулăшма, кĕçĕн политрук Ситов ертсе пынипе, группа пырса çитнĕ. Пограничниксем хăйсенчен темиçе хут йышлăрах тăшмана сирсе пăрахнă. Финсем çапăçура тăватă салтак тата пĕр офицер çухатнă. Пирĕн пограничниксем офицерăн полевой сумкине, карттăсемпе тата документсемпе пĕрле, заставăна ăнаçлăн илсе çитернĕ.

Çавăн пекех, совет пограничникĕсем, старший лейтенант Журих ертсе пынипе, геройла çапăçнă.

Ирхине унăн застави çине финсем енчен танксем кĕрсе кайнă, пограничниксем çинче тăшманăн бомбардировщикĕсен моторĕ кĕрлесе тăнă. Финсен батальонне хирĕç икĕ сехет хушши çапăçнă. Пограничниксем тăшмансен кăшăлĕнчен çăлăнса тухнă.

Действующи арми.

Хĕрарăмсем тракторпа ĕçлеме вĕренеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. июлĕн 10-мĕш. (**Телефонпа**). МТС трактористчĕсенчен чылайĕшĕ фронта тухса кайрĕç. Вĕсем вырăнне трактористсем хатĕрлес тĕлĕшпе МТС трактористсен курсне организацилерĕ. Курсра 46 хĕрарăм вĕренет, вĕсенчен иккĕшĕ килхуçи хĕрарăмĕсем. Курсра вĕренме Калинин ячĕпе тăракан колхоз 2 çын, «Правда» колхоз—2 çын, «Искра» колхоз—2 çын уйăрса янă.

М. ЯКОВЛЕВ.

Гитлеровецсем çакăн пек отпора кĕтмен те

Австри салтакĕ каласа пани

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Халăх пурăнакан пĕр вырăн патĕнчи çапăçура красноармеецсем Австри салтакне Иоган Каца тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ салтак Германи фашисчĕсем унăн тăван çĕршывне çаратса тустарни, Австри халăхне пусмăрта тытса усрани çинчен каласа пĕлтернĕ.

— Нимĕçсем Австрие пырса кĕнĕ хыççăн,—тесе каланă Кац,—пирĕн пурнăç çавтери начарланма пуçларĕ. Манăн çемье материаллă нимĕнле пулăшу та илмест. Фашистла партире тăракан салтаксен çемьисене çеç пособи параççĕ.

Иоган Кац хăй тахçанах тыткăна лекме шутлани çинчен каланă. Нимĕç çарĕнче службăра пурăнма чăтма çук йывăр.

— Акă эпĕ тăваттăмĕш талăк çывăрман ĕнтĕ,—тесе каланă Кац.—Германи çарĕнчи нумай салтаксем, ман пекех, вăрçасшăн мар, анчах персе вĕлерессинчен хăранипе çеç çапăçăва каяççĕ. Пирĕн çарта пур офицерсем те—нимĕçсем.

Фашистсен офицерĕсем: Хĕрлĕ Çар вăйсăр, эпир ăна хăвăрт çĕнтеретпĕр, тесе калаççĕ. Пире улталанине халĕ эпир куратпăр ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар енчен панă отпор пеккине нимĕç салтакĕсем нихăш вырăнти çапăçура та курманха. Пире, нимĕç салтакĕсене: тыткăна лекнисене Совет Союзĕнче асаплантарса вĕлереççĕ, вĕсенчен темĕн тĕрлĕ мăшкăлаççĕ, тесе хăратрĕç. Халĕ эпĕ курса ĕнентĕм: çапла каласа хăратни вăл—фашистла офицерсем — Германи халăхĕн тата гитлерла ордасем оккупациленĕ çĕршывсен ирсĕр тăшманĕсем—киревсĕррĕн суйни çеç пулса тăрать.

Боецсем тăшман атакине сирсе янă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Тăшманăн виçĕ роти Н. высотана йĕритавра хупăрласа илнĕ. Çав высота çапăçушăн пысăк вырăн йышăнса тăнă. Красноармеецсем Резвов, Шумилин тата Ольшевский тăшмана хирĕç пуринчен малтан çапăçма пуçланă. Вĕсем тăшман çине тĕл пеме тытăннă, анчах лешĕ лăпланман, тата ытларах хĕсме пуçланă. Çакăн хыççăн пирĕн виçĕ красноармееца пулăшма лейтенант Родионов боецсен группипе пырса çитнĕ. Обстановкăна хăвăрт хакласа, вăл высотана хӳтлес ĕçе пит ăстан организациленĕ.

Тăшман ытларах та ытларах хыттăн хĕснине хирĕç боецсем вăйлăн çапăçнă. Тăшманăн йышĕ пирĕннинчен ытларах пулнă, çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Пирĕн боецсем ответлесе пени тăшмана пĕр минутлăха та лăплантарман. Сасартăк станковăй пулемет ĕçлеме чарăннă: пулеметчик Ключников йывăр аманнă. Лейтенант Родионов юлташне пулăшма васканă. Пулемет çумне йăпшăнса пынă та, вăл тăшманăн тапăнакан салтакĕсене çĕнĕ вăйпа пĕтере-пĕтере тăкнă. Икĕ хутчен аманнă командир боевой хĕçпăшала çирĕппĕн тытса тăнă. Йывăçсем тата чулсем хушшипе пытанса, высота çине тытса чармалла мар шуса хăпаракан противник хĕснине сире-сире янă. Лейтенант Родионова виççĕмĕш пуля амантнă. Тăшман салтакĕсемпе офицерĕсем çывăхах шуса çитнĕ, анчах паттăр та тĕреклĕ командир тăшмансем çине граната хыççăн граната ывăтнă.

Çапăçу 12 сехет хушши пынă. 12-мĕш сехет вĕçĕнче юлташĕсене пулăшма лейтенант Новиков боецсемпе пырса çитнĕ. Совет çыннисен паттăр пĕчĕк ушкăнĕ — пысăк мар икĕ отделени — тăшманăн виçĕ роти атакăланине хастарлăн сирсе янă.

Боецсем хăюллăн, тĕлĕнмелле паттăрлăхпа çапăçса тăшмана Н. высотинчен каялла хăваласа янă.

Фашистсен танкĕсем каçса кĕреймен

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Хамăрăн позицисем çинче эпир окопсем алтрăмăр, вĕсене куçа курăнмалла мар туса йĕркелерĕмĕр, мĕнпур боецсем валли шанчăклă хӳтлĕхсем турăмăр.

Тул çутăлса килнĕ вăхăтра юханшывăн леш енне Германи танкĕсем пырса тухрĕç. Акă кĕпер патне пĕрремĕш машина çывхарса пырать. Унăн корпусĕ уççăнах курăнать. Пĕрремĕш снаряд танк çывăхне ӳкрĕ, иккĕмĕш снаряд ăна çĕмĕрсе тăкрĕ. Пирĕн орудисенчен тухакан çулăм çуталнине нимĕçсем асăрхарĕç Анчах та вĕсем пеме пуçланă вăхăтра пирĕн орудисемпе боецсем хӳтлĕхре пулчĕç.

Темиçе снаряд кăларса янă хыççăн Германи танкĕсем пеме чарăнчĕç. Пирĕн орудисене çĕмĕрнĕ тесе шутласа, вĕсем малалла куçма пуçларĕç. Иккĕмĕш танк кĕпер çине кĕчĕ.

Кĕпер патĕнче тĕтĕмленсе выртакан металл çĕмрĕкĕсем купаланса çитиччен темиçе хут çавăн пек пулса иртрĕ. Тăшман танкĕсенчен çав металл купи кăна тăрса юлчĕ.

Лейтенант **К. КЛИМЕНКО.**

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара паттăррăн пулăшма чĕннине ответлесе, Шупашкар районĕнчи «Чембек» колхоз государствăна 1941 çулшăн тĕштырă парса татрĕ. А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Совет халăхĕн патриотизмĕ иксĕлми вăйлă

Германин урса кайнă правителĕсем, СССР çине ăнсăртран, вăрă-хурахла тапăнса, совет халăхне хăратма шутларĕç пулмалла. Анчах вĕсем ĕмĕтленни ахалех пулчĕ, Совет халăхне вĕсем хăратаймарĕç. Германири фашистла бандитсем иртĕнсе ашкăннине хирĕç пĕтĕм халăх тухрĕ. Çакна эпир фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи, шкулсемпе учрежденисенчи политикăллă тата производствăллă çĕкленӳре аван куратпăр.

Кашни ĕççынни çакна лайăх ăнланать: вăл совет çынни, вăл тĕнчери чи ирĕклĕ, чи телейлĕ çĕршывра пурăнать, унăн телейне, унăн ирĕклĕхне Хĕрлĕ Çар сыхлать. Совет власĕ ăна ирĕклĕ, телейлĕ, тулăхлă пурнăç туса панă. Вăл малашне те çавăн пек пурнăçпа пурăнасшăн. Çавăнпа та вăл, хăй Хĕрлĕ Çар ретĕнче мар пулин те, тăван çĕршыв кунçулĕшĕн, унăн чыслăхĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшать.

Ишлей районĕнчи ĕççыннисем те çавăн пекех ăнланаççĕ, çавăн пекех тăрăшаççĕ. Германин иртĕнсе кайнă фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнса кĕнине хирĕç ответлесе, районри колхозсем, колхозниксем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пысăк хастарлăхпа пурнăçлама тытăнчĕç. Иртнĕ вунă кун хушшинче районĕпе çĕршер центнер аш-какай пухса хатĕрленĕ. Унччен иртнĕ вунă кунпа танлаштарсан, 125 процент ытларах пухса хатĕрленĕ.

Чылай колхозсем хăйсен пĕтĕм обязательствисене пурнăçларĕç. «Ыраш» колхоз 1941 çулта государствăна сĕт-çу, çăмарта памалли обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçланă. Государствăна сĕт-çу, çăмарта памалли обязательствăсене «Красное знамя» колхоз та пурнăçланă. «Парижская Коммуна» колхоз 1941 çулшăн государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата çăм памалли обязательствăсене пурне те срокченех тултарчĕ.

Районри чылай колхозсем хăйсен обязательствисене иртерсе тултараççĕ. «Звезда» колхоз государствăна 35 килограмм çăм парас вырăнне 88 килограмм пачĕ. «Самолет» колхоз хăйĕн обязательствине тултарнă хыççăн юлнă çăма та государствăна сутрĕ. Çăм тăратас обязательствăсене пурнăçланă колхозсем районра халĕ пĕрер кăна мар, вĕсем вуншарăн шутланаççĕ.

Чандр ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем çăм тата сĕт-çу обязательствисене пурте срокчен парса татрĕç. Государствăна сĕт-çу тăратас обязательствăсене районри колхозниксем пурте пурнăçласа çитерчĕç тесен те йăнăш пулмасть.

Кибечкасси ялсоветне кĕрекен «Большевик» колхоз сĕт-çу, çăмарта, çăм тăратас обязательствăсене пурне те 100 процентчĕпех пурнăçларĕ. Ку колхоз халь виççĕмĕш кварталшăн памалли аш-какая та иккĕмĕш кварталтах парса татрĕ.

Нумай колхозсем тĕштырă тăратас обязательствăсене пурнăçлама тытăнчĕç. «Правда» колхоз 100 центнер, «Ишлей» колхоз — 71 центнер ыраш панă. Ун пек колхозсем районра халĕ 30—40-рен те иртеççĕ тата кашни кунах йышланса пыраççĕ.

Укçа-тенкĕ пухас плана район ытлашшипех тултарнă. Ку тĕлĕшпе Чурачăк, Тăрăн, Ишлей, Ямайкасси ялсоветсенчи ĕççыннисен хастарлăхне уйрăмах палăртмалла. Чурачăк ялсоветĕнчи колхозниксем нумайĕшĕ заем укçине парса татрĕç. Пĕтĕм ялсоветĕпе, иккĕмĕш кварталта 4000 тенкĕ пухас вырăнне, 5300 тенкĕ пухнă.

Тăрăн ялсоветĕнчи ĕççыннисем пĕтĕм налогсене парса татрĕç. Квартал планне ялсоветĕ 301 процент чухлĕ тултарнă. Ялсоветри пĕр çынăн та недоимка çук. Квартал планне, çавнашкалах, Ямайкасси ялсоветĕ 243 процент, Ишлей ялсоветĕ 224 процент, Чурачăк ялсоветĕ 217 процент тултарнă. Ку ялсоветсенче мĕнпур недоимкăсене пухса çитернĕ.

Районри ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă çĕкленĕвĕ государство умĕнчи обязательствăсене хăвăрт пурнăçлама тăрăшнинче кăна мар, урăх ĕçсенче те вăйлăн палăрать. Фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем тăраççĕ. Машинно-тракторнăй станцине 30 хĕрача ытла трактористка ĕçне тытăнма çĕнĕрен килчĕç. Ун пек фактсем колхозсенче те сахал мар.

Мĕне пĕлтереççĕ-ха, мĕн çинчен калаççĕ-ха çак илсе кăтартнă фактсем?

Вĕсем пирĕн халăх тăшмана пуçĕпех çапса хуçма, ăна ним юлмиччен аркатма хатĕр тăни çинчен калаççĕ.

Вĕсем Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ хушшинче çыхăну çавтери çирĕппи çинчен, государство интересĕсемпе халăх интересĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăни çинчен, совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр юратни çинчен калаççĕ.

Вĕсем совет халăхĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ никам аркатайми хăватлă пулнине, Хĕрлĕ Çар тылĕ çавтери çирĕп пулнине кăтартса параççĕ.

Совет халăхĕн патриотизмĕ иксĕлми вăйлă. Тăван çĕршыва вăл пĕтĕм чĕререн юратать. Çавăнпа та ĕнтĕ вăл тăшмана çĕнтерет.

Р. МАЛЮТИН.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Стахановла ĕçпе Хĕрлĕ Çара пулăшар

Германи фашисчĕсем пирĕн телейлĕ, чечекленекен социализмлă тăван çĕршыв çине вăрçăпа тухрĕç.

Эпир, рабочисем, фашистла вăрă-хурахсене пĕтĕм чĕререн ылханса тарăхатпăр. Бандитсем пирĕн мухтавлă çĕре таптасшăн, пирĕнтен телейлĕ пурнăçа туртса илесшĕн. Гитлер бандисен ĕмĕчĕ нихăçан та пурнăçа кĕрес çук. 200 миллионлă Совет халăхĕ хăйĕн телейлĕ пурнăçне, таса çĕрне нихăçан та пĕр вершук парас çук. Фашистла çĕлен-калтасене пĕтермелле — ăна эпир пурнăçлатпăрах. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Эпир, стахановецсем, фашистла Германин ирсĕр провокацине хирĕç хамăрăн ĕç вырăнĕнче тухăçлăн, темиçе хут ытла хастарлăхпа ĕçленипе ответлетпĕр. Партипе правительство пирĕнтен мĕн чухлĕ продукци ыйтать, эпир çавăн чухлĕ туса кăларма яланах хатĕр.

Эпир хамăр фронта кайма хатĕр тăни çинчен пĕлтеретпĕр. Эпир паян тесен паянах хамăрăн станоксемпе аггрегатсене хĕçпăшалпа улăштарса çĕршыва сыхлама, тăшмана хирĕç тăрса çапăçма хатĕр.

Çĕмĕрлери «Большевик» заводри стахановецсем:

А. ЗАКАЛЯБИН,
П. КОЩЕЕВ,
А. РОМАНОВ,
Е. ВОРОБЬЕВА.

Халăха ПВХО нормисене вĕрентмелли çĕнĕ йĕрке

СССР Осоавиахимăн центральнăй совечĕ Осоавиахим организацийĕсене халăха ПВХО нормисене вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме хушнă.

Çĕнĕ йĕрке тăрăх, çичĕ темăна 13 сехет хушшинче вĕренсе пĕтермелле. Занятисем практикăллă-инструктивлă йĕркепе пулса иртмелле.

ПВХО сигналĕ пулнă хыççăн мĕн тумалли çинчен калакан правилăна (бомбоубежищĕсенче мĕнле пулмалли йĕркесем те унтах кĕреççĕ) вĕренме икĕ сехет уйăрнă. Çавăн пекех, инструктивлă калаçу хыççăн, пĕрремĕш занятирех, ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕ кăларнă обязательнăй постановленипе паллашмалла.

Иккĕмĕш тема — «Фугаснăй бомбăсенчен сыхланасси». Ку темăна виçĕ сехет хушшинче вĕренсе çитерме пăхнă. Инструктор 50 çын вырнаçмалăх шăтăк чавас тĕлĕшпе кăтартуллă заняти туса ирттерет. Вăл занятинче вырăн тупса ăна мĕнле йĕркелемеллине, 5 метр çĕр лаптăкĕ çинче шăтăк чавса кăтартса, вĕренекенсене тĕплĕн паллаштармалла.

Вĕренекенсем çав кунах хăйсем тĕллĕн 20 метр тăршшĕ шăтăк чавмалла.

Фугаснăй тата осколочнăй авиабомбăсем мĕнле пулни, вĕсем мĕнле сиенсем кӳни тата вĕсенчен мĕнле майпа сыхланмалли çинчен шăтăк алтнă вăхăтрах ăнлантарса парас пулать.

Шăтăк чавса ăна пĕтĕмпех хатĕрлесе çитернĕ хыççăн çынсем унта мĕнле вырнаçмаллине тата унта хăйсене мĕнле тыткаламалли çинчен вĕренме тытăнаççĕ.

Виççĕмĕш тема — «Çуртсене (предприятисене, учрежденисене, вĕренӳ заведенийĕсене т. ыт. те) зажигательнăй авиабомбăсенчен тата вĕсем ӳкнипе тухнă пушарсенчен сыхлама хатĕрлесси». Ун валли икĕ сехет уйăрнă.

Инструктор чердаксене, пусма картлашкисене, коридорсемпе килкартисене тасатас тĕлĕшпе тата зажигательнăй бомбăна сӳнтерме пулăшакан япаласене (хăйăр, хăйăр тултарнă ещĕк е ытти савăт-сапасем, клещесем, савуксем, витресем, шыв тултарнă пичкесем, пожарнăй крансем т. ыт. те) уйăрса парас тĕлĕшпе практикăллă заняти ирттерет. Унтан вара инструктор пушара шывпа е огнетушительсемпе мĕнле сӳнтермелли çинчен вĕрентме пуçлать.

Заняти чердак е пусма картлашки çинче пулса иртмелле. Виççĕмĕш тема тăрăх вĕреннĕ чухне вĕренекенсен практикăллă ĕçĕ çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Кăтартуллă заняти хыççăн инструктор вĕренекенсене хăйсем тĕллĕн зажигательнăй бомбăсене тата пушарсене сӳнтерме хушать.

«Зажигательнăй бомбăсене тата пушарсене сӳнтересси» ятлă тăваттăмĕш тема валли виçĕ сехет уйăрнă. Вĕренекенсем зажигательнăй бомбăсене тата тин пуçланакан пушарсене сӳнтерме вĕренсе çитмелле.

Инструктор йывăçран тунă защитнăй щитсемпе (вĕсен пысăкăшĕ 0,75×0,5 метр) усă курса, зажигательнăй авиабомбăсем ӳкнĕ пек туса кăтартса, бомбăна пӳрт-çуртран мĕнле кăларса ывăтмаллине, ăна хăйăрпа витмеллине, хăйăрлă вырăна илсе тухмаллине, хăйăр тултарнă ещĕкпе е витрепе, клещесемпе, кĕреçесемпе, савуксемпе мĕнле усă курмаллине, шыв тултарнă пичкене е ытти савăт-сапари шыва бомбăна мĕнле путармаллине, юлашкинчен, огнетушительпе тата пушар кранĕсемпе мĕнле усă курмаллине вĕрентет.

Пиллĕкмĕш темăра химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕренме пуçлаççĕ. Программăри ку разделăн пуçламĕш теми — противогазпа усă курасси, ун валли икĕ сехет уйăрнă. Практикăллă занятинче вĕренекенсен противогазпа усă курма (противогаза илме, ăна пуçа кĕме юрăхлă тума, пуçтарма, тăхăнма тата хывма, сумкăна пуçтарса чикме, çĕклесе çӳреме, усрама, юсавлă мар противогазпа усă курма, газпа антранă çынна противогаз тăхăнтарма) хăнăхса çитмелле. Çавăн пекех, çынсен хăйсем тĕллĕн противогаз тăхăнса унпа çӳреме вĕренес пулать.

Çаксем хыççăн вĕренекенсем газ сарăлнă вырăн урлă каçма пулăшакан япаласемпе мĕнле усă курмалли çинчен вĕренеççĕ. Ку улттăмĕш тема пулать, ăна валли мĕнпурĕ пĕр сехет уйăрнă. Инструктор çав япаласемпе газ сарăлнă вырăнтан тухма мĕнле майпа усă курмаллине кăтартать, вăл вăхăтра çынсен хăйсене мĕнле тыткаламаллине ăнлантарса парать.

Юлашки, çиччĕмĕш тема «Газпа аптранă çынсене врач патне илсе каличчен пулăшу памалли çинчен вĕренесси» пулать. Ăна валли икĕ сехет уйăрнă. Вĕренекенсен газпа тата химиллĕ газсемпе сиенленнисене çыхма эмелсем чикнĕ пакетсемпе усă курма, вĕсен ăшĕнчи япаласемпе ĕçлеме, юн юхнине чарма, аманнă çынсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна çĕклесе кайма, газпа аптранă е пиçсе кайнă çынсене пулăшма пĕлес пулать.

Сталин юлташ хушнине Совет халăхĕ чыслăн пурнăçлать

ЕЛЧĔК. Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă ятпа «Комбайн» колхозра нумай çынлă митинг пулса иртрĕ.

Колхозри ферма заведующийĕ Павлов юлташ митингра çапла каларĕ:

— Сталин юлташ хушнине пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртетпĕр, колхоз ĕçĕнче стахановла ĕçлесе, фронта пулăшатпăр. Колхоз правленийĕ пире, фермăра ĕçлекенсене, витесем юсаса çитерме пĕр уйăхлăх срок панăччĕ. Эпир, стахановла ĕçлесе, 20 кун хушшинче юсаса çитертĕмĕр. Колхоз правленийĕ пире 20 тонна силос хывма задани панăччĕ, эпир 40 тонна хыврăмăр.

— 1918 çулта эпир вăйсăр пулнă пулсан та, нимĕç çарĕсене çапса аркатнă. Халĕ эпир вăйлă! Совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет правительстви тавра, Сталин юлташ тавра хурçă пек çирĕппĕн пĕтĕçсе тăрать. Пирĕн халăха çĕнтерекен вăй тĕнчере çук. Эпир Германи фашисчĕсене халĕ те çапса аркататпăр,—тет колхозри строительнăй бригадăра ĕçлекен Смирнов юлташ.

Колхозра пур колхозниксем те пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. 700 гектар çинче тырпула çум курăкĕсенчен тасатнă. Уборкăна пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Государствăна 64 центнер тырă леçсе панă.

Ф. МАЙКОВ.

Хастарлă письмоносец

ЕТĔРНЕ. Кăкшăмри Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕ А. Максимов юлташ письмоносец пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратать. Çырусемпе хаçат-журналсене вăхăтра леçсе парать.

Аван ĕçленĕшĕн Максимов юлташа колхозниксем ырлаççĕ.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Колхозниксен хастарлăхĕ

Ирхине, ĕçлеме каяс умĕн, «14 лет Октября» колхоз членĕсем ялсовет канцелярине пуçтарăнаççĕ. Радио юлашки хыпарсен ирхи кăларăмне парать. Ăна кашни колхозник пысăк интереспа итлет. Юлашки хыпарсем итленĕ хыççăн, колхозниксем пурте ĕçлемелли вырăнсене саланаççĕ.

— Паян пирĕн клевер çинчи çумсене çумласа пĕтермелле. Ыран тепĕр уйне куçатпăр, — тет бригадир Мажуков юлташ.

Хăшĕсем тата çулйĕр строительствине, вăрман хатĕрлеме, пахча-çимĕçсем патĕнче ĕçлеме каяççĕ. 4 колхозник урапасем тунă çĕрте ĕçлет. Килте ларакансем çук. Çак юлашки кунсенче колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ уйрăмăнах ӳсрĕ. Кашни колхозник халь, колхоз производствинче стахановла ĕçлесе, тăшмана çĕмĕрсе тăкас çĕрте паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас шухăш-кăмăлпа пурăнать.

«14 лет Октября» колхоз членĕсенчен хăшпĕрисем фронта кайрĕç. Часах вĕсен ĕç вырăнĕсене урăххисем — колхозницăсем тăчĕç. Колхозра халь хĕрарăм ĕçлемен вырăн çук, пур участоксенче те ĕçлеççĕ вĕсем. Варвара Хуморова — утар заведующийĕ, Ксения Отрыванкина сĕт-çу фермине, Анна Немова чăх-чĕп фермине ертсе пыраççĕ, Анна Хуморовăпа Евдокия Фомина — звеноводсем.

Колхоз производствинче пионерсемпе шкул ачисем те активлăн ĕçлеççĕ: вĕсем правленине пырса ĕç ыйтаççĕ. Елена Корнилова, Лев Хуморов, Феодосия Лицавкина тата ыттисем те ир пуçласа каçчен çум çумланă, пахча-çимĕçсем шăварнă çĕрте ĕçлесе, пысăк пулăшу параççĕ.

Колхозра çитес кунсенчех ачасен яслине ĕçлеме пуçлать. Кирлĕ япаласене хатĕрлесе çитернĕ. Çурт пирки кăна ĕç кăштах чарăнса тăнăччĕ. Халĕ вăл та пур, фронта тухса кайнă Андрей Николаев арăмĕ Надежда хăйĕн çуртĕнче яслĕ валли пĕр пӳлĕм уйăрнă.

Колхоз канцелярийĕнче правлени бухгалтерĕсĕр пуçне урăх никам та çук. Кунта колхозниксем ир тата каçхине çеç пĕр вăхăт хушши пухăнса калаçаççĕ. Кăнтăрла — пурте ĕçре. Сайра хутра кăна правлени канцелярине бригадирсем, ферма заведующийĕсем пырса каяççĕ. Акă канцелярине Фекла Мяльцева пырса кĕчĕ. Ăна халь çеç яслĕ заведующине çирĕплетнĕ.

— 6,5 килограмм сахăр илсе килтĕм. Урăх тата мĕн илмелле-ши? — ыйтать вăл бухгалтертан.

— Мĕн çитмест пек туйăнать, çавна ил. Пуканесем çитмеççĕ-и-ха?

—Пуканесем иртнĕ çултисем те пур. Анчах çителĕксĕр пек. Ман шутпа татах илес пулать пулĕ,—тет Мяльцева юлташ. Вăл Çĕмĕрле хулине пуканесем, теттесем илме васкавлăн тухса каять.

Кăштах тăрсан канцелярине сĕт-çу фермин заведующийĕ Отрыванкина юлташ пырать. Вăл июнь уйăхĕнче фермăри ĕнесенчен мĕн чухлĕ сĕт суса илни çинчен сведени пама килнĕ.

—Халĕ манăн ĕç çăмăлланчĕ. Фермăра мансăрăнах ĕçлеме пултараççĕ. Эпĕ çулйĕр строительствине ĕçлеме каясшăн, — тет вăл. **Хар. ЛИСИН.**

Çĕмĕрле р.

Колхозниксем пулăшнипе

КУКЕÇ. Шăмăршăри туллимар вăтам шкул хуçалăхĕ лайăхланса пырать. Шкул участокĕнче кăçал тĕрлĕ культурăсем, чечексем акнă. Вăрлăхсене ялсоветне кĕрекен «Память Ленина», «Большая Волга», Водопьянов тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем панă. Çав колхозсемех халь шкул участокĕ тавра карта тытса тата 400 кубометра яхăн вутă турттарса панă.

(Хамăр инфор.).

А. Кокорекин художник ӳкерчĕкĕ. («Искусство» издательстви кăларнă плакатран тунă репродукци). ТАСС фотохроники.

Çулпуç чĕнсе каланине ответлесе

СĔНТĔРВĂРРИ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă ятпа хулари ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ.

Митингра СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл ĕççыннисен вăрçă вăхăтĕнче тумалли ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

— Пирĕн çулпуç аслă Сталин пире, —терĕ Андреева юлташ, — харпăрхăй вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе ĕçлеме, çирĕп дисциплинăллă, организациллĕ пулма, сыхăлăха нихăçанхинчен те вăйлатма чĕнчĕ.

Андреева юлташ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата унăн боецĕсем тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешни çинче чарăнса тăчĕ.

Митингра судоверфьри рабочи-стахановец Староверов, комбайнерка Профиркина, колхозница Степанова, интеллигенци ячĕпе Васюгин, комсомол тата çамрăксен ячĕпе Бойко юлташсем тухса сăмах каларĕç.

— Эпир, — тет рабочи-стахановец Староверов юлташ, — Сталин юлташ чĕнсе каланине производствăра ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстернипе ответлетпĕр. Эпĕ хамăн нормăна кунсерен 3—4 хут ирттерсе тултаратăп. Кирлĕ пулсан, партипе правительство чĕнсен, эпĕ хамăн производствăри инструментсене винтовкăпа улăштарса тăшмана хирĕç кĕрешме яланах хатĕр.

— Эпир, хĕрарăмсем, фронта каякан аттесем, пиччесем, шăллăмсем, упăшкасем вырăнĕнче ĕçлесе, — тет комбайнерка Профиркина юлташ, — ăнса пулакан тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕртĕпĕр. Ирсĕр фашистсем пĕлсе тăччăр: совет хĕрарăмĕ пысăк вăй, вăл фронтра та тăшмана хирĕç кĕрешме хатĕр тăрать. Эпир, машинно-тракторнăй станцинчи трактористкăсем тата комбайнеркăсем, районри хĕрарăмсене ялхуçалăх машинисене вĕренме, фронта каякан арçынсем вырăнче ĕçлеме чĕнетпĕр.

—«Хĕрлĕ Çар» колхоз тырпулсене уйран пуçтарса кĕртме лайăх хатĕрленсе çитрĕ. Ялхуçалăх машинисем хатĕр, вĕсемпе ĕçлеме хĕрарăмсене уйăртăмăр. Эпир Хĕрлĕ Çара мĕн чухлĕ продукт кирлĕ, çавăн чухлĕ пама пултаратпăр, пама тивĕçлĕ те.

Митинг участникĕсем пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç. Сĕнтĕрвăрри хулинчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара, Тинĕс Çар Флотне пулăшма пулчĕç. Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе колхозницăсем тăван çĕршывшăн мĕнпур вăя хурса ĕçлеме, организациллĕхпе сыхăлăха вăйлатма, мĕнпур ĕçе оборона интересĕсене пăхăнтарма, партипе правительство тавра, аслă Сталин тавра таччăн пĕтĕçме тупа турĕç.

В. ИВЛЕВ.

Государствăна тырă параççĕ

ТАВАЙ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине Ленин ячĕпе тăракан тата «КИМ» колхозсенчи колхозниксем пурте пĕрле пухăнса вуласа тухнă. Сталин юлташ Совет халăхне чĕнсе каланине ырласа, колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлаççĕ, государствăна срокчченех тырă параççĕ. «КИМ» колхоз государствăна 100 центнер, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 97 центнер тырă леçсе панă.

А. КАХОВСКИЙ.

Социализмлă тăван çĕршыв оборонине çирĕплетме

Пирĕн республикăра Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема çырăнасси организованно иртрĕ.

Çĕнĕ заемшăн укçа пухасси те ăнăçлă пырать. Республикипе илсен, июнь уйăхĕнче укçа пухмалли плана 153 процент, çак шутран колхозниксемпе единоличниксем енĕпе 134 процент ытла тултарнă.

Пĕтĕм Совет халăхĕ отечественнăй вăрçăна çĕкленчĕ. Пурин те пĕр ĕмĕт: фашистла тăшмана тăван çĕршыв çинчен хăваласа кăларас, ăна çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтас. Тăван çĕршыв оборонине çирĕплетме халăх хăйĕн пĕтĕм вăй-халне, пĕтĕм пурлăхне пама хатĕр тăрать.

Çак хăрушă обстановкăра финанс организацисемпе перекет кассинчи работниксем умне çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç. Финанс органĕсенчи хăшпĕр работниксем, заем уполномоченнăйĕсем тăван çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕç. Фронта кайнă работниксем вырăнне çĕнĕ работниксем тупса лартнă. Массăллă-ăнлантарулла ĕçе малтанхинчен те лайăхрах туса пыма тытăннă. Заем тытакансем хушшинче ĕçлессине лайăхлатнă. Çапла вара, июнĕн юлашки вунă кунĕнче, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем укçи пухмалли плана 106 процент ытла тултарнă.

Ф. МИРОНОВ.

Хĕрарăмсем тракторпа ĕçлеме пуçлаççĕ

ЙЕПРЕÇ. Июлĕн 1-мĕшĕнче машинно-тракторнăй станцире пулса иртнĕ канашлăва трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă, халиччен колхозсенче тĕрлĕ ĕçре пулнă колхозницăсем пухăнчĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар ретне каякан арçынсем вырăнне тракторсемпе ĕçлеме кăмăл турĕç.

Трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă Козлова юлташăн упăшки Хĕрлĕ Çар ретĕнче, алра пĕчĕк ача пур. Çавах та вăл уборка вăхăтĕнче трактористка пулса ĕçлесшĕн, МТС директорĕнчен ăна хăйсен колхозĕ çывăхĕнчи участокра ĕçлеме яма ыйтрĕ. МТС дирекцийĕ Козлова юлташ ыйтăвне пурнăçларĕ, ăна трактор çинче ĕçлеме ирĕк пачĕ.

Тракторсем çинче ĕçлеме 16 хĕрарăм тытăнаççĕ.

Кунсăр пуçне тата производствăран уйăрăлмасăр трактористсен курсĕнче 8 хĕрарăм вĕренеççĕ. Пĕр «Чувашия» колхозăн кăна унта 6 колхозници вĕренет. Вĕсем çак кунсенчех курсран вĕренсе тухаççĕ.

В. ДЕФЕРАН.

Стахановла ĕçлетпĕр

ÇĔМĔРЛЕ. Гитлерла бандитсем пирĕн чечеклĕ çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнни пире, рабочисемпе работницăсене, хыттăн тарăхтарчĕ. Çĕленкалтасене, çын вĕлерекенсене эпир вĕçĕ-хĕррисĕр ылханатпăр.

Фашистла бандитсен ирсĕр ĕмĕчĕсем нихçан та пурнăçа кĕрес çук! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар урса кайнă фашистсене çирĕп отпор парасса пĕр иккĕленмесĕрех шанатпăр. Эпир, социализмлă çĕршыври ĕççыннисем, тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр.

Древкомбинатри вуншар стахановецсем хăйсен кулленхи ĕç нормисене 3—4-шер хут ирттерсе тултараççĕ. Климов, Симонов, Большаков, Зотов юлташсем хăйсен кулленхи нормисене яланах 300—450 процент таран тултарса пыраççĕ.

Манăн упăшка Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăван çĕршыва сыхлать. Эпĕ—стахановка, цехра раскройщица пулса ĕçлетĕп, хамăн нормăна виçĕ-тăватă хут ирттерсе тултаратăп. Тухăçлă ĕçлес, тăшмансене çирĕп отпор парас çĕрте хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пулăшасси — манăн чи малтанхи ĕмĕт. Халĕ эпĕ тепĕр профессине — диспетчер пулса ĕçлеме вĕренме пуçларăм. Ку професси питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен эпĕ Хĕрлĕ Çар ретне каякан арçынсем вырăнне тăрса хăюллăнах ĕçлеме пултаратăп.

В. МАРЕЕВА.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи 4-мĕш номерлĕ цехри стахановка.

Пысăк çĕкленӳ

ЕТĔРНЕ. Пушнарти Чкалов ячĕпе тăракан промысла артелĕнчи работниксем хушшинче социализмлă ăмăртусарăлсах пырать. Кулленхи ĕçе график тăрăх туса пырса, производствăллă плана уйăхран уйăха, кварталтан квартала ирттерсе тултараççĕ. Артель хăйĕн çурçул планне 120 процент тултарчĕ. Кăларакан продукцин пахалăхĕ те лайăхлансах пырать. Çĕвĕ çĕлекен цех кăçал пĕтĕмпех пĕрремĕш сортлă продукци туса кăларнă. Стахановла ĕçлекенсем А. Кузьмина, Е. Фомичева, А. Абрамова, Л. Смирнова, М. Иванова, Н. Токарев, И. Яковлев, Е. Егорова, А. Андреева юлташсем ĕç нормине яланах ирттерсе тултараççĕ.

Артельте ĕçлекенсем СССР Верховный Совет Президиумĕ «Рабочисемпе служащисен ĕç вăхăчĕн вăрçă вăхăтĕнчи режимĕ çинчен» кăларнă Указа пысăк хаваслăхпа кĕтсе илсе, ăна пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Виççĕмĕш кварталти производствăллă плана икĕ уйăх хушшинче тултарассишĕн кĕрешӳ сарăлса пырать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Сыхăлăх тата организациллĕх!

Совет патриотизмĕн чи паллă, уйăрса илме çук енĕсем — революциллĕ сыхăлăх, организациллĕх, паттăрлăх пулса тăраççĕ. Çак пахалăхсем кашни чăн-чăн совет патриочĕн пулмалла.

Хальхи вăрçă условийĕсенче революциллĕ сыхăлăх йышăнса тăракан вырăн темиçе хут ӳсет. Фашистла тăшман хаяр та ирсĕр. Вăл хăйĕн этеме курайман ĕçĕнче ниепле тискерлĕхсемпе преступленисем умĕнче те чарăнса тăмасть. Фашизм вăл таттисĕр провокацисемпе тискер ĕççен [illegible]икĕсĕ çинче çуралса аталанса пынă. [illegible]ăй власть патне пынине вăл Герма[illegible]и халăхĕке демократийĕ тĕлĕшĕпе ка[illegible]ама çук хăрушла провокаци тунипе—рейхстага вут тĕртсе çунтарнипе, нихăш енчен те айăплă мар пиншер çынсене вĕлерниpе паллă тунă.

Влаçа хăй аллине илсен, фашизм пур çĕршывсенче те иезуитла шпионаж системине сарма, пур çĕрте те предателле пиллĕкмĕш колоннăна ӳстерме тытăнчĕ, вăл хăйне валли троцкистла-бухаринла анчăксен бандине сутăн илсе служба тăратрĕ. Пур çĕршывсенче те вăл хăйĕн тăван çĕршывне, чысне сутма пултаракан Квислинг, Лаваль йышши çынсене шырарĕ. Вăрçă условийĕсенче вăл тылра диверсисем тума парашютистсемпе усă курать, хăйĕн салтакĕсене милиционерсемпе красноармеецсен формине тăхăнтартса, вĕсене тыла ярать, —пĕр сăмахпа каласан, хăйĕн преступленилле задачсене пурнăçа кĕртме чи ирсĕр, тискер меслетсемпе усă курать.

Çаксене пурне те хирĕç совет халăхĕн революциллĕ сыхăлăхĕ тухса тăмалла. Фашистсен пур чеелĕхĕсемпе тăшманла ĕçĕсем те революциллĕ сыхăлăх çине пырса çапăнса арканĕç.

Хальхи вăхăтри вăрçă фронтпа тыл хушшинчи уйрăмлăха пĕтерет. Тăшман пĕр вăхăтрах пограничнăй вырăнсенчи малти позицисем çине те, фронт линийĕнчен аякра тăракан объектсене те тапăнать. Тепĕр енчен, тыл фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрать. Тыл тĕрĕссĕн, таттисĕр, йĕркеллĕн ĕçлени — фронтра çĕнтерӳсем тумашкăн кирлĕ.

Çавăнпа та революциллĕ сыхăлăх пур çĕрте те кирлĕ. Вăл разведкăна янă Хĕрлĕ Çар дозорĕ валли те, противовоздушнăй оборонăна сыхлаканшăн та, предприяти директорĕшĕн те, цех начальникĕшĕн те, колхоз председателĕшĕн те, парти аппарачĕпе совет учрежденинче ĕçлекеншĕн те, СССР-ти пур ĕççыннисемшĕн те кирлĕ.

Ĕççыннисен сарлака массисем кăна çакăн пек сисĕмлĕ сыхăлăха палăртма пултараççĕ. Тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте массăсен сыхăлăхĕ мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен пĕрремĕш чекист —Ф. Дзержинский илсе кăтартнă тĕслĕхе нихăçан та манмалла мар. Вăл белогвардеецсен пысăк заговорĕн пĕр участникне допрос тунă чухне, лешĕ ăна ăнсăртран лекрĕм, çав «случай» пулман пулсан, вĕсен заговорĕ пулса çитетчĕ, тенĕ. «Случайĕ» çакăн пек пулнă: урамра тăракан красноармеец çав шпион хĕрĕн аллинчен тухса ӳкнĕ çыхха асăрханă, вара ăна тытса чарнă та, шпиона палăртма пулăшнă. ВЧК председателĕ ăна хирĕç: совет çĕршывĕшĕн ку вăл ăнсăртран пулакан япала мар, мĕншĕн тесен пур ĕççыннисем те хăйĕн влаçне тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пулăшса пыраççĕ, тенĕ.

Хальхи вăрçă вăхăтĕнче совет çыннисем фронт линийĕ хыçне аннă тăшманăн парашютисчĕсемпе летчикĕсене, урăхла тумланнă диверсантсене тытса хĕçпăшалсăрлатнă нумай фактсем пур ĕнтĕ.

Сыхăлăх тĕлĕшĕпе, Хĕрлĕ Çар хыççăн, çĕршыв оборони валли ĕçлекен ĕççыннисем умне пысăк требованисем тухса тăраççĕ. Кунта кашни ытлашши каланă сăмах тăван çĕршыва пит пысăк сиен кӳме пултарать, ĕçре сыхă пулманни пит пысăк йывăрлăхсем кӳрет. Кашни работникĕн хăйĕн сисĕмлĕ те сыхă пулмалла, кунсăр пуçсăр тата ыттисене те çавăн пекех сыхă пулма хушмалла.

Революциллĕ сыхăлăх организациллĕхпе питĕ тачă çыхăнса тăрать. Организациллĕ пулни халăх массисен патриотла çĕкленӳпе ĕçри геройла кĕрешӳ çулĕпе илсе пыма май парать.

Вăрçă пуçланнă кун Молотов юлташ совет правительстви ячĕпе хамăр çĕршыври ĕççыннисене çапла каларĕ:

«Хĕрлĕ Çар, Флот тата Авиаци ыйтнисене пурнăçа кĕртмешкĕн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашниех хăйне тата ыттисене те чăн-чăн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинăллă, организациллĕ пулма тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла».

Организациллĕх пирĕн пĕтĕм пурнăçра пулмалла. Вăл военнообязаннăйсене призыв тăвассине хăвăрт, тĕрĕс ирттернинче, вăрçа кайнисен вырăнне çĕнĕ рабочисем тăратассинче, противовоздушнăй оборонăна сарса, ăна кирлĕ пек йĕркеллĕн тăвассинче, фронтпа тыл валли ĕçлекен пур органĕсем те тĕптĕрĕс ĕçлессинче, предприятисем, транспорт пысăк хăвăртлăхпа ĕçлессинче, тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртессинче палăрса тăмалла.

Организациллĕх çаксене ыйтать: яланах малалла пăхса тăмалла, паян — ыранпа виçмине мĕн тумаллине курмалла, задачăсене пурнăçа кĕртме вăхăтра хатĕрленмелле, пулма пултаракан йывăрлăхсене шута илсе, вĕсене çĕнтермелли çулсене палăртса хумалла. Партин, советсен, хуçалăх организацисен, колхозсен кадрĕсем çине уйрăмах пысăк ответлăх ӳкет.

Совет патриотизмĕ çакна ыйтать: кашни совет çынни тăшмана çĕнтерес ĕç валли мĕнпур вăйне памалла. Кам та кам «моя хата с краю» текен принциппа шухăшласа пурăнать, çавсене валли вырăн пулмалла мар. Кашни совет çынни — совет халăхĕн геройла кĕрешӳне активлăн хутшăнмалла. Тата кашниннех вăл хуть еплĕ вырăнта ĕçлени те кирлĕ, усăллă пулнине, фашизма хирĕç ĕçри вклад пулнине пĕлсе тăмалла.

Кам та кам тăрăшмасăр, чиновникла, начар ĕçлет — çавна пĕтĕм совет халăхĕ сивлĕ. Кам та кам дезорганизаци тăвать — çавă тăшмана пулăшать, унăн вăрçă вăхăтĕнчи законсен çирĕплĕхĕпе ответ тытмалла.

Большевикла организациллĕх вакбуржуаллă сӳпĕлчĕке, çемçелĕхе, пуçа çухатса янине — паникерствăна тӳсме пултараймасть. Тăшман паника сарма тăрăшассине яланах астăвас пулать. Уншăн вăл — фронтра пулсан та, тылра пулсан та хăйĕн ирсĕр ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртмелли майсенчен пĕри пулса тăрать.

Фашистла варварсем пирĕн çĕршыв çине ирсĕр тискерлĕхпе тапăннине хирĕç, совет халăхĕ хăйĕн речĕсене тимĕр пек çирĕп организациленипе, вĕсене Ленинпа Сталин партийĕ, совет правительствийĕ тавра тата çирĕпрех пĕтĕçтернипе ответлет.

Ленин совет халăхне интервентсене хирĕç таса вăрçăпа çĕкленме чĕннĕ сăмахсем халĕ пĕтĕм вăйпа янăраççĕ: «...кашнине уйрăмăнах каласа ăнлантарас пулать: унăн паттăрлăхĕнчен, хăюллăхĕнчен, чĕререн парăннинчен вăрçă пĕтесси килет» (т. XXIV, 261 стр.).

Ку тылра ĕçлекенсене те пурне те тивет. Пур вăйран тăрăшса ĕçлени фронтри кĕрешӳ валли хĕçпăшал туса парать.

Пирĕн çĕршыв социализм тăвассишĕн кĕрешнĕ çĕрте никам курман ĕçри çĕкленӳ тĕслĕхĕсене кăтартрĕ, вăл тăван çĕршыва сыхлассишĕн кĕрешнĕ çĕрте те ĕçри тĕлĕнмелле паттăрлăхне кăтартĕ. Пирĕн çĕршыва, пĕтĕм цивилизациллĕ тата культурăллă этемлĕхе курайманнипе суккăрланса тăнă фашистла тискер çĕлен пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен хăватлă вăйĕпе арканса таптанĕ.

Б. ПОНОМАРЕВ.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмах пирки Италире мĕн çыраççĕ

ЖЕНЕВА, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Кунта килсе çитнĕ çынсем Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă хыççăн Миланра сарнă чи юлашки листовкăсенчен пĕрне илсе килнĕ. (Паллă туса хăварас пулать, Гитлер ССР Союзĕ çине тапăннăранпа фашизма хирĕç кĕрешекен тĕрлĕ организацисем Италири пысăк хуласенче — Римра, Неапольра, Миланра тата ытти хуласенче — халăхăн тĕрлĕ сийĕсене тата Итали çарне чĕнсе вуншар воззвани кăларнă).

Листовкăра çапла каланă: «Итальянецсем, эсир ĕнтĕ нумай çулсем хушши вăрçатăр. Эсир юрлă тусем çинче, шăрăх пушхирсенче çапăçрăр. Анчах мĕн туянтăр-ха эсир? Нимĕн те çук. Мухтав та, мир те, çăкăр та çук. Çак тытамаклă нимĕç фюрерĕ пĕтĕм халăхсене хăйне пăхăнтартăр тесе сирĕн малашне те хăвăрăн пуççене хумалла пулать. Курмастăр-и эсир, пирĕн патăрта нимĕç фашисчĕсем хăйсене хăйсем килти пек тыткалаççĕ. Вĕсем пире союзниксем, тăвансем теççĕ, анчах та чăннипе вара пире ĕç выльăхĕ вырăнне шутлаççĕ. Германие пухса кайнă итальянецсене унта мĕнле тыткалани çинчен пĕлместĕр-им эсир. Рур бассейнĕнче, бомбăсем ытларах пырса пăрахакан нумай районсенче итальянецсем кăна ĕçлеççĕ темелле. Ыйтăр-ха хамăртан хамăр: Гитлерăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем кирлĕ-и пире? Вăл советлă Российăна хирĕç пуçланă вăрçăра çĕнтертĕр тесе шутлатпăр-и эпир? Ун чухне пире нимĕç фашисчĕсем татăклăнах хăйсен чурисем туса хураççĕ вĕт. Пирĕн пĕр çул кăна — хамăрăн вырăс тăвансемпе каймалли çул. Вĕсем çĕнтерни эпир те ылханлă фашистла тата нацистла пĕтĕм ирсĕре çĕнтерни пулса тăрĕ».

Италирен килнĕ çав çынсем каланă тăрăх, çавăн пекех тата Итали цензури витĕр тухса килекен çырусем тăрăх, Сталин выступленийĕ Итали халăхĕ çине мĕнле влияни панине уççăнах чухласа илме пулать. Мĕнпур чăрмавсем витĕр тухса, Сталин сăмахĕ Итали халăхĕн анлă сийĕсем патне çитнĕ. Çакна ăна ăнланмалла та ĕнтĕ: пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăнă выступленине халăхран пытарса хăварма май çук, чикĕсем леш енчен тĕрĕс сăмах илтес тесе нимĕнрен те хăраса тăман вуншар пин итальянец темĕн тума та хатĕр тăракан условисенче ăна пушшех те пытарса хăварма май çук.

Сталин сăмахĕ, тесе каласа парать кунта Миланран килнĕ пĕр журналист, Итали халăхне шанчăк панă. Кунта вăл фашизма — пĕтĕм этемлĕхе хăратса тăракан чума чирне пĕтерсе тăкма чĕнекен набат пек кĕрлесе кайнă. Фашистла пуçмăр кашни итальянеца икĕ хут вăйлăн пăвса тăрать. Вăл «хăйĕн» фашистла ушкăнĕнчен, «дучепе» унăн тăванĕсен, унăн шайккинчи çынсен кĕтĕвĕнчен хĕн-хур тӳсет. Вăл Германи нацисчĕсенчен асап тӳсет, вĕсем, чăннипе илсен, Италине хăйсене пăхăнтарнă, кунта пĕр намăса пĕлмесĕр хуçаланса пурăнаççĕ. Сталин фашизма хирĕç кĕрешме чĕнни итальянецсен чĕрине чи тарăна кĕрсе вырнаçнинчен тĕлĕнмелли пур-и ĕнтĕ.

Италия—Германи колонийе

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Афи агентствин обозревателĕ Фернан Мулье çапла çырать: хальхи вăхăтра Германире Италие, вăрçăра поражени тӳснĕ хыççăн Германи аллине кĕрсе ӳкнĕ çĕршывсем пекех, оккупациленĕ территори вырăнне шутлаççĕ. «Дас Райх» ятлă еженедельник нумаях пулмасть пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ çинчен статья пичетлесе кăларнă, çав статьяра Италия оккупациленĕ территорисен шутĕнче тăрать. Статья авторĕ Италия, Бельгия, Польша тата Германия тытса илнĕ ытти çĕршывсем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та тумасть.

Германипе Итали экономики пĕрле çыхăнса ĕçленĕн курăнать, чăннипе вара Италин экономикăллă пĕтĕм пурнăçне Германия контроллесе тăрать. Германипе Италин хутăш комиссийĕ Италири промышленноçлă мĕнпур предприятисене перепис тăвать, çак ĕçре чи малтанах предприятисем туса кăларакан продукцие шута илеççĕ. Предприяти продукци çителĕксĕр туса кăларнине палăртсан, ăна хупаççĕ, предприятире ĕçленĕ квалификациллĕ рабочисене Германие ăсатаççĕ. Германи чĕртаварĕпе тата çурмафабрикачĕсемпе усă куракан фабрикăсене пурне те хупаççĕ, вĕсенчи рабочисене Германие яраççĕ. Германи материалĕсемпе ĕçлекен пĕр предприяти хăйĕн яланхи поставщикне заказ янă. Поставщик: Италие материалсем яма пултараймастăп, анчах та, предприятине Германие куçарсан, заказа пурнăçлама хатĕр, тесе ответленĕ. Итали предприятийĕн хуçи килĕшнĕ, рабочисене Германие куçма сĕннĕ, анчах рабочисем унта куçса кайма итлемен. Ун хыççăн çак ĕçе нимĕçсем хутшăннă, вĕсем рабочисене Германие ямалла тунă.

Итали журналисчĕ ирĕксĕр йышăнни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Римри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Итали журналисчĕ Малапарте «Корьере Делла сера» хаçатра пичетленĕ статьяра, июнĕн 27-мĕшĕнче Яссы хулинче (Румыния) Румыни халăхĕ восстани пуçланă тесе çырать. Восстани виçĕ кун хушши пынă, хулан тĕрлĕ районĕсене çавăрса илнĕ. Малапарте çакна кăтартса парать: пур урамсенче те вăйлă çапăçусем пынă, кашни çурт патĕнче çапăçу пулнă. Чугунçул мастерскойĕсем патĕнче те çапăçусем пуçланнă. Июнĕн 28-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле, тесе çырать малалла корреспондент, хулара пăшалтан тата пулеметсенчен пенĕ сасăсем илтĕннĕ. Малапарте: восстание «юн айне» туса пусарнă тесе çырать, анчах çакна йышăнать: «Урамсен кĕтессинче тăракан хĕçпăшаллă жандармсем пĕрмаях аяккалла пăхса тăраççĕ, кирек хăш вăхăтра та хыçран, çурăмран пересрен хăраççĕ».

Перемири тăвасси çинчен Англия Денца сĕннĕ условисем

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генерал Денца Англия перемири тумалли çинчен тăратнă условисем çакăн пек 10 пунктран тăраççĕ: 1) Англия Сирипе Ливанăн территорийĕсене туртса илме шухăшламасть, анчах та вĕсемпе тăшман усă курмалла ан пултăр тесе тăрăшать. 2) Франци интересĕсем Сирия никама пăхăнмасăр пурăнасси çинчен Англия гарантиленĕ рамкăсенче пурнăçа кĕрсе пымалла. 3) Виши правительствин хĕçпăшаллă вăйĕсен мĕнпур çар снаряженине: тупăсене, самолетсене, оборудованине тата çар карапĕсене пĕтĕмĕшпех тата юсавлипех союзниксене памалла, Англи коммуникацийĕсемпе транспортне малашне пăсмастпăр, тесе гаранти памалла. 4) Виши войскисене е де Голль генерал енне каçма е Францине каялла таврăнма ирĕк параççĕ. Вĕсем Сирире юлаççĕ пулсан, вĕсене де Голль генералăн регулярнăй войскисен речĕсене кĕртеççĕ. 5) Офицерсене, салтаксене мĕнле тума сĕннĕ, вĕсене те çавăн пек тума сĕнеççĕ. 6) Сирире юлма кăмăл тăвакан чиновниксене пурне те хăйсен функцийĕсене малашне те туса пыма ирĕк параççĕ. 7) Вишин гражданла администраци войскисенчи çынсене суд урлă ответ тыттармаççĕ. 8) Сирия стерлинговăй блок членĕ пулса тăмалла. 9) Германипе Итали представителĕсене англичансен аллине памалла. 10) Çар карапĕсене портсенчех хăварса, вĕсене англичансене памалла, англичансем вĕсемшĕн ответлă пулаççĕ.

Франци халăхĕ Гитлер пусмăрĕнче асапланать. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: оккупациленĕ зонăра кашни çын пуçне пĕр эрне пурăнма çакăн чухлĕ паек параççĕ. («Лайф» журналран илнĕ репродукци).

Англи авиацийĕ Германири промышленноçпа чугунçул центрĕсем çине бомбăсем пăрахни

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви авиаци министерствин коммюники тăрăх çапла пĕлтерет: Англи бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем ĕнер кăнтăрла Германири промышленноçлă об'ектсем çине çĕнĕрен пырса тапăннă. Галль тата Лейна районĕнчи, Лейпциг çывăхĕнчи, Лондонран 550 миляри промышленноçлă предприятисем çине бомбăсем пăрахнă. Англи самолечĕсем Лейнра синтетически нефть кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен пысăк предприяти çине бомбăсем пăрахнă. Вăл предприяти «Фарбениндустриа» ятлă хими концернĕн аллинче тăрать. Çак предприяти вăл—Германин синтетически нефть кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен чи пысăк предприяти шутланать, унта кашни çулах 400 пин тонна нефть кăларнă. Бомбăсем пăрахнипе предприятин нумай пайĕнче взрывсем пулнине палăртнă.

Коммюникере малалла çапла каланă: Каммри чугунçул узелĕ çине бомбăсем питех те вăйлăн пăрахнă, унта вăйлă взрывсем нумай пулнă. Чугунçул сооруженийĕсене сиен тунă. Англи летчикĕсем каялла хăйсен базисене таврăннă чухне пысăк пушарсен çулăмĕсене курнă. Противник истребителĕсенчен пĕри Англи бомбардировщикĕсем çине тапăнма хăтланнă, анчах ăна çийĕнчех персе антарнă, истребителе вут хыпса илнĕ, вăл çĕре персе аннă.

Англи авиацийĕ Мюнстер çине тăватă каç умлăн-хыçлăнах бомбăсем пăрахнă. Англин пĕр пилочĕ пĕлтернĕ тăрăх, Мюнстерте калама çук пысăк пушарсем тухнă. Чугунçул линийĕсем, чугунçулăн главнăй станцийĕнчен аякра мар вырăнти аэродром çине бомбăсем тĕл ӳкнине палăртнă.

Кунсăр пуçне, Англи самолечĕсем Билефкльд çине те бомбăсем пăрахнă.

Коммюникере çапла кăтартса панă: кăнтăрлахи операцисем вăхăтĕнче противникăн 13 самолетне персе антарнă, вĕсенчен 12 самолечĕ—истребительсем тата пĕри—бомбардировщик.

Германия „большевизма хирĕç хĕреслĕ таса поход“ организациленме хăтланни саланса кайни çинчен Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем умстатьясенче, национал-социалистсем чиркӳсене хĕсĕрленине хирĕç протестлесе Германи епископĕсем çырнă çыру фашистла Германи «большевизма хирĕç хĕреслĕ таса поход» организацилеме хăтланни саланса кайнине кăтартса парать, тесе çыраççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: «Мускав çине похода» текен лозунга массăсем йышăнмаççĕ çеç мар, католичество та ăна хирĕç тăрасси вăйланса пырать. Хаçат нумаях пулмасть католически чиркӳсен Америкăри деятелĕсем çырнă заявленине аса илтерет. «Гитлер,—тенĕ вăл çырура,—пирĕн тĕп тăшман пулса тăрать, вăл малалла куçса пырассине чарса лартмаллах, пирĕн пĕтĕм вăйпуринпе те тăшман пулса тăракан Гитлера хирĕç тăрас çĕре хумалла».

«Нью-Йорк таймс» хаçат, Германири католиксем националистла режима хисеплеме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вăл вĕсен шкулĕсене, хаçачĕсене хупрĕ. Хальхи вăхăтра фашистла режим «христианствăшăн» кĕрешнĕ пек туса кăтартма тăрăшать, тесе çырать. Хаçат июлĕн 7-мĕшĕнче Вашингтонран католически епископ Херлей радио тăрăх тухса каланине аса илтерет, епископ «çынсен пысăк мар ушкăнĕ вăрçа коммунизма хирĕç хĕреслĕ поход туса хума тăрăшакансемпе килĕшмесĕр» вĕсене хирĕçле сăмах каланă пулнă. Херлей Рузвельт политикипе, фашизма хирĕç кĕрешмелли политикăпа, килĕшни çинчен каланă.

США-ри летчиксене мобилизацилени

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри сывлăш-çар вăйĕсен руководителĕсем хальхи вăхăтра, çар самолечĕсене Англие хăвăртрах çитерес тесе, квалификациллĕ граждăнла летчиксене суйласа илеççĕ. Халиччен Англие самолетсем ăсатас тĕлĕшпе ĕçлекен организаци приказĕ тăрăх, хĕвеланăç çыранĕнчи заводсенчен çар самолечĕсене Атлантика океанĕн хĕррине тăратнă, унтан вара Англи летчикĕсем вĕсене Англие илсе каяççĕ. Августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа Америкăн резервра тăракан летчикĕсене пурне те, питех те кирлĕ участоксенче ĕçлекеннисемсĕр пуçне, действительнăй службăна илеççĕ. Ун пек летчиксен шутне сывлăшри линисем тăрăх пассажирсем илсе çӳрекен летчиксем, вĕçев шкулĕсенчи инструкторсем, авиаци промышленноçĕнчи работниксем кĕреççĕ. Çара пурĕ 10 пин ытла резервиста илмелле, тесе шутлаççĕ.

Бельгире курăкран çăнăх туса кăлараççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Брюссельри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Остендери фабрика хальхи вăхăтра, Германири промышленность примерĕ тăрăх, курăкран, клевертан тата люцернăран çăнăх туса кăларать. Фабрика çавăн пекех тата çăнăх туса кăларас ĕçре сахăр кăшманĕпе те усă курма тытăнмалла.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха США-ра уйрăм брошюра туса кăлараççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, «Уоркерс Лайбрери паблишерс» издательстви Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмаха уйрăм брошюрăпа 1,5 миллион экземпляр кăларма йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Брошюра: «Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать» ятлă пулать.

Франци Сирири командованине генерал Вильсон тăратнă ультиматум

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин Сирири войскисен командующийĕ генерал Вильсон ультиматум тăратнă, çав ультиматум тăрăх Англи войскисем Бейрута, хула парăнмасть пулсассăн, ăна штурмлама тытăнаççĕ. Ультиматум срокĕ Гринвич вăхăчĕпе паян 4 сехет те 30 минутăра тухнă.

Денца чĕнсе каласа, Вильсон çакăн çинчен пĕлтернĕ: Англи войскисем Бейрут оборонин тулашри линийĕсене татса хула патнелле пыраççĕ. Англичансем граждăнла халăх хушшинче нимĕн сăлтавсăр жертвăсем тума тата хулана çĕмĕрме шухăшламаççĕ. Бейрута уçă хула тесе пĕлтерме тата войскăсене эвакуаци тума хушатăп, унсăрăн вăрçă ĕçĕсем пуçланаççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генерал Денца тăратнă ультиматум срокĕ тухнă, çавна май Англи войскисем Бейрут çине наступлени тума пуçланă.

Германи, Румыни тата Финлянди командованийĕсенчи улшăнусем

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Виширен Германи, Финлянди тата Румыни командованийĕсенче тĕрлĕрен фронтсенче улшăнусем туни çинчен калакан сведенисем илнĕ. Антонескуна Германипе Румыни войскисен командованийĕнчен хăтарнă, ун вырăнне Германи генералне Листа лартни çинчен пĕлтереççĕ. Çавăн пекех фронтăн Украинăри секторĕнче çапăçакан Германи войскисен командованине те улăштарнă. Кунсăр пуçне Финляндин пĕр генералне ĕçрен кăларнă.

Неаполь çине бомбăсем пăрахни

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Неаполь çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахни çинчен тĕплĕн пĕлтернине илмен-ха.

Англи авиаци министерстви пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 10-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германин чикĕ хĕрринчи Аахен ятлă хули çине пырса тапăннă. Вăл хула çĕркăмрăкĕпе руда нумай хисепленекен районра вырнаçнă. Бомба пăрахса промышленность çурчĕсене вăйлăн çĕмĕрнĕ. Çавăн пекех, Оснабрюкра та предприятисемпе коммуникацисем çине, Билефельдри тата Мюнстерти об'ектсем, Остенде докĕ çине бомбăсем пăрахнă. (ТАСС).

Италин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Сфорца заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Анн Арборан (Мичиган штачĕ) пĕлтернĕ тăрăх, Италин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Сфорца çапла каланă: Италия вăрçăра поражени тӳсни—вăл Муссолини правительстви хăвăрт саланса каясса пĕлтерет. Итальянецсем пĕлеççĕ, тесе кăтартса парать корреспондент, Италире пысăк йĕркесĕрлĕхсем сиксе тухас-мĕн пулсан, Гитлер хăйĕн войскисене хăвăртах Милана, Венецине, Триеста тата Рима илсе пырать. Италия—вăл Германин протекторачĕ. Нимĕçсем Ливине оккупациленĕ. Гестапо Итали полицине контроль туса тăрать. Итали промышленноçĕн чылай кирлĕ отраçлисемпе тулашри политикине контроль туса тăрас ĕçе те Германия хăй аллине илнĕ.

Сĕнтĕрвăрри хулинчи медицина сестрисем хатĕрлекен кружок занятийĕнче. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: противогазпа усă курма вĕренеççĕ.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Колхозсем утă çулаççĕ

ВĂРНАР, июлĕн 11-мĕш. (Телефон тăрăх). Уравăш ялсоветĕнчи «1-ое Мая» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем утă çулса пĕтерчĕç. Зеленовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз утă çулмалли плана 50 процент тултарнă.

Нумай колхозсем государствăна утă памалли плана çийĕнчех тултарса пыраççĕ. Паян «1-ое Мая» колхозран утă леçме 16 лав Канаша тухса кайрĕç.

ТĂВАЙ, июлĕн 11-мĕш. (Телефон тăрăх). Районри пур колхозсем те çаран утисене тата люцерна çулса пĕтернĕ. «Свободный труд» колхозри нумай колхозниксем утă çулмалли нормăна 150—180 процент тултарса пынă. Ĕç тухăçлăхĕ ытти колхозсенче те пысăк. «Искра Ильича», «Пламя» тата Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем клевер çулма тытăнчĕç. Ямбулатоври «Звезда» колхозра столовăй организациленĕ.

Агитаторсем колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса юлашки хыпарсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Нумай колхозсенче, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх сăмах каланă май, уйрах пухусемпе митингсем туса ирттернĕ. Агитаторсем Сталин юлташ чĕнсе калани çинчен ăнлантарса панă. «1-ое Мая» колхозра митинга 150 çын ытла пухăннă.

С. ДАНИЛОВ.

ÇĔРПӲ. Июлĕн 10-мĕш тĕлне районра 50 колхоз ытла Çавал шывĕ хĕрринчи улăхсенче утă çулма тухрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем, лайăх çанталăкпа усă курса, утă çулас ĕçе кĕске срокра вĕçлессишĕн тăрăшаççĕ.

Малта пыракан колхозсем—Чурачăкри «Броневик», Туçари «Цивильстрой», Хыркассинчи «Кульмет», «Молодая сила», «Красный герой» т. ыт. колхозсем улăхри утăна çулса пĕтернĕ те ĕнтĕ.

Чылай колхозсем, улăхри утăна çулнипе пĕрлех, клевера та çулаççĕ.

И. ПЕТРОВ.

Тырпула кĕске срокра пухса кĕрер

ЕТĔРНЕ. Кăтăшри «Пионер» колхоз уборка ирттерме план тунă. План тăрăх ыраша 5 кун хушшинче, çуртрисене 6 кун хушшинче вырса пĕтермелле. Çакна пурнăçа кĕртме колхоз пур енчен те тĕплĕн хатĕрленет. Ача-пăчаллă хĕрарăмсене ĕç вăхăтĕнче чăрмав ан пултăр тесе, 80 ача валли яслĕ организацилерĕ. Яслĕ июлĕн 8-мĕшĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Уйри тата улăхри ĕçсем вăхăтĕнче столовăй организацилеççĕ. Апат-çимĕç продукчĕсем çителĕклĕ хатĕрленĕ.

3 жнейка, 2 молотилка, 5 сеялка, пĕр триер юсаса лартнă. Колхозра 76 урапа. Вĕсене çирĕплетсех тăраççĕ. Машинăсемпе ĕçлеме пултаруллă колхозниксене уйăрнă. Вĕренсем, шăналăксемпе михĕсем çителĕклĕ. Амбарсене, витнĕ итемсене йĕркене кĕртме тытăннă. Колхозри ĕçсене 10 звено туса пырать. Звеноводсем—колхозри стахановецсем. Звеносен ĕç планĕ çинче кашни уйрăм колхозник ăçта тата мĕн ĕçлемеллине тĕплĕн кăтартса панă. Июлĕн 8-мĕшĕнче колхозниксем утă çулма тытăнчĕç. Колхозниксем малтанхи кунах пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. И. Никитин, Г. Семяшкин, Константинов юлташсем утă çулмалли плана 140—150 процент тултараççĕ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн та кĕрешӳ сарăлса пырать. Ирхи çĕртме уйне 6 пин лава яхăн тислĕк кăларса сухаласа хăварнă.

Н. ЦВЕТКОВ.

ИШЛЕЙ. Колхозсен уйĕсенче вăйлă тырпул ӳсет. Кĕрхи тырăсем пур тĕлте те шăркана ларчĕç. Тырă пĕрчисем тулсах пыраççĕ. Çуртри тата ытти культурăсем те ăнăçлăн пулаççĕ. Пăхатăн та тулли кăмăлпа савăнатăн.

Колхозниксем тырпулсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленеççĕ. «Вускасси» колхоз уборкăра кирлĕ ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса лартнă. Транспорт инвентарĕсем юсавлă. Тырпулсем пухса кĕнĕ вăхăтра ача ясли пулать. Яслĕ валли мĕн кирлине пĕтĕмпех уйăрса хунă.

«Клевер» колхозра 45 ача валли яслĕ пулать. Пĕрлешӳллĕ столовăй валли çăнăх авăртса хатĕрленĕ. Ытти тĕрлĕ çимĕçсем те кирлĕ чухлех пур. Тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра медицинăпа ветеринари енĕпе пулăшу парассине организацилеççĕ.

—Тырпулсем ăнăçлă ӳсеççĕ. Вĕсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртетпĕр,—теççĕ колхозниксем.

С. МАМАЕВ.

Тăрăшса ĕçленипе

ЕТĔРНЕ. Районри колхозсем Сталин чĕнсе каланине ĕçпе ответлеççĕ, вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ. Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхоз государствăна 54 центнер тĕштырă панă. Çав ялсоветне кĕрекен «Правда» колхоз та 59 центнер тĕштырă панă.

Çавăн пекех, заем укçине пуçтарас ĕç те аван пырать. Ялсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем хăйсен июнь уйăхĕнчи ĕç укçине пĕтĕмпех заемшăн тӳлерĕç.

Колхозсем, колхозниксем тырпула уйран пĕр тăккаламасăр тата вăхăтра пуçтарса кĕртме хатĕрленеççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозра 263 çурла, 253 çава, 173 кĕрепле, 2 жнейка юсаса хунă. Колхоз çум çумласа пĕтернĕ.

Хĕрлĕ Çара кайнă арçынсем вырăнĕнче ĕçлес тесе çак кунсенче ялсоветĕнчен 12 хĕрача производствăна тухса кайрĕç; 3 колхозница трактористсен курсĕнче вĕренеççĕ.

И. ТИМОНИН.

Чугунçул çинче

Шупашкар хулинчи комсомолецсем, хальхи вăхăтра чугунçулсем йĕркеллĕ ĕçлени пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, Шупашкарти чугунçул станцинче лайăх йĕрке тума ĕçпе пулăшаççĕ.

Июлĕн 6-мĕшĕнче «Вышивка» артельри, госбанкри, спиртзаводри тата ытти предприятисемпе учрежденисенчи комсомолецсем Шупашкарпа Канаш хулинчи чугунçул çине ĕçлеме тухрĕç. Ĕçре уйрăмах госбанкрипе «Вышивка» артельри комсомолецсем хытă тăрăшрĕç. Халĕ комсомолецсем кашни кун пекех ĕç пĕтнĕ хыççăн чугунçула пулăшма ĕçе каяççĕ.

А. ЭРРЭ.

Трактористкăсем плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ

ТĂВАЙ. Машинно-тракторнăй станцинче çамрăк хĕрачасем йышлăн ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăра ĕçлекен А. Иванова тата Н. Федорова кулленхи нормăна 130 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçлекен тракторсем нихçан та усăсăр лармаççĕ.

Ф. Порфирьевăпа Т. Александрова виççĕмĕш çул ĕнтĕ трактористка пулса ĕçлеççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн МТС вĕсене темиçе хутчен те премиленĕ.

Ф. Петрова юлташ та лайăх ĕçлет. Кулленхи нормăна вăл 140—150 процент тултарса пырать, кăçал 169 килограмм горючи перекетленĕ.

Хĕрлĕ Çара кайнă арçынсем вырăнĕнче ĕçлекен трактористкăсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ.

Е. ТИМАКОВА.

Йышлăн пырса курнă

Чăвашсен Академи театрĕн артисчĕсем июлĕн 6-мĕшĕнче Улатăрта «Мо[illegible]сын» ятлă пьеса лартса панă. Вăл пьесăна Венгри писателĕ-революционер Шандер Гергель çырнă. Пьеса Венгри революционерĕсем фашистсен тискерлĕхне хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартса парать.

Малтанхи кунах вăл спектакле 500 çын ытла пырса курнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ДОНОР
пулас текенсене
Шупашкар больницин хирурги уйрăмĕнче йышăнаççĕ.
Телефон 5—40. 3—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2549

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. 6 98 84 п. л.